*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

18 (2430) [1]
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
пуш, 12

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

«ХРЕСЧЕН САССИ» – ВĂРМАР РАЙОНĔНЧЕ

## Кахалланмасан – тăрантарать

***Ĕçлесен, кахалланмасан фермерсем Вăрмарсене тăрантармалла. Район администрацийĕн тĕп специалисчĕ Николай Михайлович Михайлов палăртрĕ çак шухăша. Иртнĕ çулта районта сухаламалли пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 60 процентне (13 300 гектар) "ĕçлеттернĕ". Ку вăл виçĕм çулхинчен çичĕ процент нумайрах. Пĕр-икĕ çул каялла фермерсем хальхинчен ытларах шутланнă. Налук тытăмĕнчи улшăнусем хыççăн йыш чакнă. Статистика кăтартăвĕсем тăрăх, пĕлтĕр аллă фермер ĕçленĕ, тыр-пул, çĕр улми, пахча çимĕç çитĕнтернĕ. Çĕнĕлĕхсемпе туслашнисем те, тытăннă ĕçе пăрахнисем те пулнă. Фермерсен пурнăçне тишкерме тытăнтăмăр та эпир районăн тĕп агрономĕпе.***



Людмила Маркеловапа Галина Желтухина. («Урмарская» чăх-чĕп фабрики)

**– Николай Михайлович, сирĕн пата çитиччен Энтрияль, Пысăк Енккасси ял тăрăхĕсенче пулма тӳр килчĕ. Хаçатра сăнĕсене кăларма тесе хресченсене ("Сăнсем" ярăм валли) шыраса хăшкăлтăмăр. Çынсене ĕненессĕн, йĕркеллĕ ял хуçалăх предприятийĕ çук. Фермерсенчен пĕри паян хулана тухса кайнă-мĕн, теприн выльăхĕ начарланса хĕç пек тăрса юлнине ăнлантăмăр...**

– Агроном пулнă май выльăх пирки калаçмăп. Фермерсем ку тăрăхра çук мар. Энтрияльĕнче кăна малтан 7-8 фермерччĕ, купăста лартатчĕç. Халĕ унта "Ирис" ятлă пĕр хресчен хуçалăхĕ тăрса юлчĕ. Мăкшăсем купăстана пĕр тенкĕпе (1 килограмне) сĕнме тытăнчĕç те тупăш çуккипе фермерсем ку пахча çимĕçе ӳстерме пăрахрĕç. "Ирис" хуçалăх хальлĕхе 5-6 гектар лартать-ха.

Çĕр улмипе ĕçлеççĕ фермерсем. Геннадий Ямуков пĕлтĕр – 300, Ольга Иванова 75 гектар лартнă. Ытти сен лаптăкĕсем пĕчĕкрех.

**– Кăларнă хыççăн вырнаçтарса пĕтермелле-çке. Йывăрлăх сиксе тухмасть-и?**

– Геннадий Ямуков патне "фура" йышши машинăсем черетпе килсе тăраççĕ. Самай инçете ăсатать вăл "иккĕмĕш çăкăра". Ялан туянакансем ăна лайăх пĕлеççĕ, çĕр улми пахалăхĕ те япăх мар.

**– Юлашки вăхăтра чăваш çĕр улмин тути пирки урăхларах каланине те илтетĕн.**

– Пирĕнне хурланине илтмен. Фермерсем сутма Хусана çӳреççĕ те, унта чăваш çĕр улмине хапăлласах туянаççĕ, ырлаççĕ. Наркăмăшлă химикатсемпе сахалрах усă курнăранах-тăр.

Тăрăшуллă фермерсем сортсене çĕнетеççĕ. Уйрăмах Беларуçăнне кăмăллаççĕ. Акă Ольга Иванова фермер çак çĕр-шывран 20 тонна вăрлăхлăх çĕр улми илсе килчĕ. Ăна тĕрĕсленĕ хыççăн Раççей ял хуçалăх центрĕн Чăваш Енри уйрăмĕн специалисчĕсем те тĕлĕннĕ. Ун пек таса, пач чирчĕрсĕр çĕр улми курман иккен вĕсем.

5-мĕш стр. ➔

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

## Сĕте йӳнĕпе парас килмест

***"Ĕне тытакансем халь пайта кураççĕ. Тул çутăлсанах яла сĕт пуçтаракан машина килсе чарăнать. Ял çыннишĕн питĕ меллĕ. Анчах хак вылявне ăнланма йывăр. Хĕл варринче 23 тенкĕпе (хăш-пĕр ялсенче) пуçтарнине илтрĕмĕр, унтан 18 тенке çити чакрĕ. Пирĕн тăрăхра темшĕн йӳнĕрех пек туйăнать. Çак тытăмра йĕрки çукрах пулас".***

***Р. ИВАНОВА. Тăвай районĕ.***

Тăвай район администрацийĕн ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ Валерий Чайкин пĕлтернĕ тăрăх – сĕт рынокĕнчи лару-тăрăва куçран вĕçертмен, халăха иртнĕ тĕл пулусенче панă сĕнӳсене шута илнĕ. Хуçалăхсенче туса илнĕ продукцин пĕр пайне "Акконд – агро" предприяти туянать. Уйрăм çынсем Канашри "Сĕт картишĕ" фирмăна пама хăнăхнă. Асăннă юлташлăх машинисем паян 18 тенкĕпе пуçтараççĕ, укçипе вăхăтра татăлни паха.

Кӳршĕллĕ Вăрмар, Канаш районĕсенче те сутăн илмелли хаксем çав шайра. Калăпăр, Чупайра нарăсра пĕр литр сĕте 23 тенкĕпе илни пулкаланă, халь чакать.

Елчĕк продукцине Патăрьелсем килсе туянни çинчен хыпарлаççĕ. "Энтепе" юлташлăх ертӳçи Андрей Васильев сĕтĕн чи пысăк сорчĕ 21,46 тенкĕпе сутăнни çинчен каласа пачĕ. Уйрăм çынсем хак улшăнăвне витĕм кӳрейменнине палăртрĕ вăл. Пуçтаракан мĕн хак парать – çав висерен иртеймĕн.

Етĕрнере хаксем хăйне май "ташлаççĕ": аслă çул çинче вырнаçнă ялсенче хак пысăк, кӳршĕллĕ пурăнакансем кăмăлсăртарах. Тĕрĕссипе, хушма укçа кĕнĕ чухне хресчен пит хаклашса тăмасть, сĕт-турăха кирек кама та тыттарса яма хатĕр.

Хамăр туса илнĕ çимĕçе нихăшĕн те йӳнĕпе парас килмест ĕнтĕ. Продукцин пĕр пайне ютран килнисем туянни шухăшлаттарать. Ку ыйтăва нумаях пулмасть республика правительствин шайĕнче сӳтсе яврĕç. ЧР Ял хуçалăх министрĕн çумĕ Ирина Кошкина темиçе цифра илсе кăтартрĕ. Ял халăхĕнчен сĕт пухассипе 200 ытла пайтаçă ĕçлет, вĕсем куллен 300 тонна туянаççĕ. Çак тупăшура вырăнти продукци тирпейлекен предприятисем çухалса кайман, унччен хыçăнусене татман. Хак шайлашăвне йĕркелессипе малашне тимлĕрех ĕçлесси куç кĕрет.

Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕн директорĕ Федор Волков сĕт рынокĕнче йĕрке тума сĕннипе килĕшмелле. Уйрăм пайтаçă ялта хăйне хуçа пек тыткалать, налук тӳлемест. Çакна кура налук службисем сас паманни питĕ тĕлĕнтерет.

Республикăри сĕт тирпейлекен 12 предприяти суту-илĕве паха апат-çимĕç ăсатма тăрăшать. Шел пулин те, хуçалăхсем чĕр тавар пахалăхне лайăхлатмалли майсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ. Сăмахран, иртнĕ çул сĕтĕн 16,4 процентĕ – чи аслă категорие, 68,4 процентĕ – пĕрремĕш сорта, 15,2 проценчĕ иккĕмĕш сорта ларнă.

**Григорий СЛАВИН.**

ШУХĂШ

## Хăçан ăнланĕç?

Хресчен – ĕлĕкренех ĕçпе нушаланакан çын. Çакна шута илсех Совет тапхăрĕнче пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем йĕркелесе янă. Эпĕ, ялта çуралса ӳснĕскер, çĕр ĕçне ăнланатăп, терт-нушана пĕлетĕп. Çапах та пĕрлешӳллĕ хуçалăхра ĕçленĕ вăхăта савăнсах аса илетĕп. Анне каланă тăрăх – вĕсен çемйинче 11 ачаран вуннăшĕ хĕр ача пулнă. Арçын ачана çеç çĕр панăран çемье чухăна юлнă. Ачаранах тарçăра ĕçлеме тивнĕ хĕрсен. Çав шутрах аннен те. Хуçа патĕнче шыв арманĕ тунă чух тăмпа хăйăра çара уран çăрнăран вăл трахома чирĕпе чирленĕ: çăрăлчăкĕ калама çук сивĕ пулнă.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине пула пĕчĕкренех ĕçе хăнăхма тиврĕ пирĕн. 10-12 çулти ачасене бригадир авăн çапма илсе тухатчĕ. Кĕлтесене молотилка параппанĕ патне сĕтĕреттĕмĕр. Молотилка сахал пулнăран кашниех унпа усă курма тăрăшатчĕ. Унсăрăн авăн çапасси хĕле те кĕретчĕ. Гришăпа Райка тантăшсем авăн çапнă чухне капан тĕпĕнче шӳсе сарăхнă пăрсана çисе чирлесе вилчĕç.

Вăрçă пуçланас умĕн тыр-пул ăнса пулчĕ. Колхоз пӳлмине вырнаçманнине ял-йыш кĕлетне хучĕç. Паян хирсем ут кăшкар айне путнă. Хаяр вăрçă çулĕсенче вĕсене алă вĕççĕн сухаланă, акнă, пухса кĕртнĕ. Уй-хир ĕçне таса тумтир тăхăнса тухатчĕ ял-йыш. Каçхине çамрăксем урамра савăнатчĕç: таврара балалайка, купăс сасси янăратчĕ.

Йывăр вăхăта кура тăраниччен апат та çиеймен эпир. Кăмака хутма вутă çукран сивве те тӳснĕ. Çапах ман ӳсĕмрисем, 90 çул урлă каçнисем, чылайăн. Мĕншĕн тесен эпир ĕçкĕ-çикĕпе паянхи çамрăксем пек алхасман. Ĕç хыççăн усăллă канма пĕлнĕ.

21-мĕш ĕмĕр наукăпа техника тĕлĕшĕнчен пуян. Анчах çĕр ĕçне паян манăçа кăлартăмăр. Ял та ватăлса пырать, хушма хуçалăхсенче выльăх шучĕ чакать. Эпĕ ача чухне тăван ялта 263 килччĕ, паян 80-шĕ хупă лараççĕ, 15-ĕшĕ тĕпренех çухалчĕ çĕр çинчен. Вăй питти çамрăк Мускав тăрăх тарçăра çӳрет. Укçапа килеççĕ те лавкка умĕнче пĕр вăхăт савăнаççĕ. Кайран пенсионерсенчен кивçен укçа илсе каллех Мускава васкаççĕ. Çапла пурăнатпăр ялта. Вăрман çумĕнчи масар çинче çеç çĕнĕ урамсем хутшăнса пыраççĕ.

Çĕр-шыва такам та ертсе пычĕ. Манăн ĕмĕрте чылай пуçлăх улшăнчĕ, анчах пĕри те хресчен шăпине татаклăн татса пама тăрăшмарĕ. Çулсерен вун-вун ял çухалать Раççейре. Хăйсене хĕрхенмесĕр çĕр-шыва тăшманран хӳтĕленĕ çынсене аса илетĕп те, паянхи пурнăç мыскаришĕн чун ыратать. Хăçан ăнланакан пулĕç-ши хресчене? Çĕр ĕçне унсăр никам та тăваяс çук.

**В. КОЖАНОВ.**

**Вăрнар районĕ, Мăнъял Хапăс ялĕ.**

### ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 12.03 | 13.03 |
|---|---|---|---|
| Температура, $^0$С | 2–4 сехетре<br>14–16 сехетре | –3<br>+3 | –3<br>+4 |
| Юр çăвать | | * | * |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 747 | 738 |

## Пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ.***

# Ҫуни хатӗр, лаши – ҫук

Иртнӗ ҫул вӗҫӗнче вӗренӳ ҫинчен калакан саккуна тӳрлетӳсем кӗртрӗҫ, вӗренӳ учрежденийӗсене лицензи парас йӗрке улшӑнчӗ. Ҫӗнӗлӗхсене шута илсессӗн паян мӗн пур автошкул саккуна пӑсса ӗҫлет темелле. Ҫакна кура вӗренӳ надзорӗ вӗсен ӗҫне чарма тытӑннӑ та ӗнтӗ. Хӑш-пӗр шкула тивӗҫтермен условисене вара кашни вӗренӳ заведенийӗнчех тупма пулать. "Ҫывӑх вӑхӑтра водителе вӗренсе алла права илме май та пулмӗ", – тесе ҫырать "Российская газета" хаҫат.

Лару-тӑрӑва тишкерсессӗн вӗренӳ надзорӗ темиҫе регионти автошкула суд урлӑ хуптарма пуҫланӑ е пысӑк суммӑлӑх штрафланӑ. Сӑлтавӗ мӗнре тетӗр-и? Автошкулсен ҫул ҫинчи хӑрушсӑрлӑх инспекцийӗ ырланӑ вӗренӳ программи пулмалли ҫинчен хамӑрӑн кӑларӑмсенчен пӗринче ҫырнӑччӗ. Кунсӑр пуҫне вӗренӳри пурлӑх базi тивӗҫтернипе тивӗҫтерменнине те патшалӑх инспекцийӗн тӗрӗслесе хут ҫырса памалла. Автошкулсен кун пекки пулман. Тепӗр тесен, вӗсен ҫак условисене пурнӑҫлама май та ҫук, мӗншӗн тесен водительсене хатӗрлемелли ҫӗнӗ программӑсене саккунпа ҫирӗплетмен. Вӑя кӗнӗ тӳрлетӳсене те хушма актсемпе ҫирӗплетмелле. Вӗсене министерствӑсем е правительство хӑй те йышӑнма пултарассӗ, анчах хальлӗхе кирлӗ документсем проектсенче ҫеҫ.

" Чӑн та, реформа паян чӑхӑмлать, автошкулсем те йывӑрлӑхра. Пӗлтӗрхи чӳк уйӑхӗн 5-мӗшӗнче вӑя кӗнӗ саккунпа шкулсем водительсене хӑй хальлӗн вӗрентсе хатӗрлеймеҫҫӗ. Халӗ лицензи илнӗ автошкулсенче кӑна вӗренмелле. Саккун ыйтнӑ пек актсем хатӗр мартан лицензи те параймаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне ятарлӑ вӗренӳ программисем кирлӗ. Анчах вӗсем те хатӗр мар – Юстици министерствинче регистрациленеҫҫӗ кӑна. Регистраци вӗҫленмесӗр автошкулсем программӑсем илеймеҫҫӗ. Право тӗлӗшӗнчен ҫакӑн пек килӗшӳсӗрлӗх сиксе тухать", – палӑртать автошкулсен регионсен хушшинчи ассоциацийӗн президенчӗ Татьяна Шутылева.

Унӑн шухӑшӗпе – автошкулсем ӗҫлесшӗн пулманнипе мар, кирлӗ документсем ҫукkипе ӗҫ-пуҫ ҫапла килсе тухать. Пӗр йӗркерен теприн ҫине куҫнӑ тапхӑрта мӗн тумаллине чи малтан ведомствӑсен татса памалла. Халӗ автошкулсем тӑкак тӳсеҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтрах хӑй тӗллӗн ӗҫлекен курссем ӑнланмалла мар лару-тӑрупа усӑ курса ҫаплипех ӗҫлеҫҫӗ, услам тӑваҫҫӗ. Кирлӗ хутсене йӑлт хатӗрлесе ҫитермесӗр те йӗрке пулмӗ. Ҫакна ӑнланмалла ӗнтӗ.

Кунсӑр пуҫне автомат коробкӑллӑ автомашинӑпа экзамен тытма та, "М" категори илме те ятарлӑ актсем кирлӗ. Ҫуркунне ҫитнӗпе пӗрех. Ачасем скутерсемпе, мопедсемпе категори илмесӗрех чупма тытӑнӗҫ. Кун пек лару-тӑрура аварисен шучӗ ӳсмессе кам шантарӗ? Ҫакӑ нумайӑшне шухӑшлаттарать, пӑшӑрхантарать.

# Йывӑр тиевлисен – тӑхтамалла

Кӑҫалхи **ака уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 30-мӗшӗччен (юлашки куна шута илсе)** республикӑра тиевлӗ е тиевсӗр пысӑк транспорта пурте усӑ куракан автоҫулсемпе (регион тата муниципалитет пӗлтерӗшлисемпе) вӑхӑтлӑха ҫӳреме чараҫҫӗ. Ҫакӑн пирки Чӑваш Республикин Транспортпа ҫул-йӗр министерстви пӗлтерет.

Ҫуркуннехи ҫанталӑкра ҫулсем шывланаҫҫӗ, нӳрӗ асфальт йывӑр тиевлӗ машинӑсене пула ванма пултарать.

Анчах пур транспорта та чармаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, инҫетри регионсене тавар турттараканнисене, халӑха илсе ҫӳрекен автобуссене, апат-ҫимӗҫ, утӑ-улӑм, эмел, ҫунтармалли-сӗрмелли материал, акмаллилартмалли вӑрлӑх, удобрени, почта турттараканнисене. Ҫавӑн пекех ҫанталӑка пула



сиксе тухнӑ инкеке пӗтерме васкакан, авари вырӑнӗсенче юсама кирлӗ пулакан ҫулйӗрпе строительство техникине, федерацин ӗҫ тӑвакан влаҫӑн транспортне (енчен те саккунпа ҫар службинче шутлансассӑн) чармаҫҫӗ.

# Трактор рулӗ умне ларӗҫ

Ял хуҫалӑх предприятийӗсенче механизаторсем ҫитменни ертӳҫӗсене пуҫ хыҫтарать. Тӑрӑшуллисене, яваплӑха туйса вӑй хураканнисене тупма уйрӑмах йывӑр. Ҫын техникӑпа епле ӗҫлесси ҫул ҫӳреме вӗреннӗ хыҫҫӑн экзаменсене мӗнле тытнинченех палӑрать. Акӑ нумаях пулмасть Канашри ДОСААФ автошкулӗнчен машинист-тракторист профессине алла илекенсем (В, С, Е категорилӗ пулма) вӗренсе тухнӑ. 26 вӗренекенрен 24-шне кӗртнӗ экзамена. Вӗсем теори ыйтӑвӗсене хуравланисӗр пуҫне практика пӗлӗвне автошкул картишӗнче кӑтартнӑ.

# Ҫылӑхсӑр чунсем...



Ҫуран е автомашинӑпа ҫула тухатӑн-и – куҫ-пуҫа яланах ӗҫлеттермелле, хӗвӗшекен халӑх хушшинче пысӑк ҫынна та, пӗчӗк ачана та асӑрхама ӗлкӗрмелле. Ҫул ҫӳреме пӗлменрен пурнӑҫран уйрӑлатпӑр-ҫке эпир. Кашни минутра, сехетре ӑҫта та пулин ҫын вилӗм тупать. Ҫылӑхсӑр ачасем шар курни пушшех чуна ҫӳҫентерет.

Ҫулталӑк пуҫланнӑранпа республикӑри ҫулсем ҫинче автомашинӑсем ачасем ҫине кӗрсе кайнӑ ултӑ тӗслӗхе шута илнӗ. Ҫул урлӑ ятарлӑ вырӑнта каҫнӑ чухне те асӑрхамаҫҫӗ пӗчӗкскерсене водительсем. Юлашки икӗ уйӑхра кунашкал тӑватӑ тӗслӗхе палӑртнӑ.

Машинӑра ларса пынӑ тӑватӑ ача аслисен айӑплӗпе инкек тӳснӗ. Ашшӗ е амӑшӗ ҫӑмӑлттайланса машинӑна хытӑ хӑвалаҫҫӗ, хирӗҫ килекен автотранспорт ҫулӗ ҫине сиксе тухаҫҫӗ тата ытти те. Ачасене машинӑра ҫыхӑнтармасӑр е ятарлӑ кресло ҫине лартса илсе ҫӳременни те хӑрушлӑх патне илсе ҫитерет.

Статистика тӑрӑх – **кӑҫал ачасемшӗн кӗҫнерни кунпа эрне кун уйрӑмах инкеклӗ** килсе тухнӑ. **17 сехетрен пуҫласа 19 сехетчен авари йышлӑ** пулнӑ.

## Ачаллӑ хӗрарӑма та курман-ши?

Чӗвӗлти чӗкеҫ пек хӗр ачипе ашшӗамӑшӗн савӑнса кӑна пурӑнмаллаччӗ. Тӑватӑ ҫулти чиперккен ҫылӑхӗ те, айӑпӗ те ҫук ӗнтӗ. Анчах ҫул ҫинчи инкеке пула пурнӑҫран вӑхӑтсӑр уйрӑлса кайнӑ вӑл.

Иртнӗ ҫулхи раштавӑн 3-мӗшӗнче ирхине "Форд-224326-02" маршрут таксийӗ Шупашкарта Ленин проспектӗнчен Гагарин урамӗ еннелле кайнӑ чухне ачаллӑ хӗрарӑм ҫул урлӑ каҫнӑ. 34 ҫулти водитель ҫынсем ҫул урлӑ каҫакан вырӑнта пӗчӗк ачине йӑтса пынӑ хӗрарӑм ҫине пырса кӗнӗ.

Йывӑр суранланнӑ хӗр ачана больницӑна ӑсатма тивнӗ. Темӗн пек тӑрӑшсан та тухтӑрсем унӑн пурнӑҫне ҫӑлса хӑварайман. Кӑҫалхи нарӑс уйӑхӗн 16-мӗшӗнче хӗр ача ӗмӗрлӗхех куҫне хупнӑ.

Тепӗр тӑватӑ кунран ҫак тӗслӗхпе следстви органӗсем уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ. РФ УК 264-мӗш статйин 3-мӗш пайӗпе айӑпланакана пилӗк ҫул таран ирӗкрен хӑтарма пултараҫҫӗ.

## Вӑрӑсем ҫывӑрмаҫҫӗ

Пуш уйӑхӗн 4-мӗшӗнче Патӑрьел ҫынни Шупашкартан килне ҫитме ҫула тухнӑ. Ҫӗрпӳ хулинчен иртсен ӗҫри машинин урапи пушаннӑ. Арҫын кӗсье телефонӗпе такси чӗнтернӗ те ҫывӑхри юсав пунктне утнӑ. Ҫур сехетрен "Газель" машини патне таврӑннӑ. Алӑкне уҫсан шанк хытса тӑнӑ: ӑшӑ кӗрӗк, автомагнитола, документсен сумки ҫӗр ҫӑтнӑн ҫухалнӑ. Ҫак япаласемсӗр пуҫне ҫемье валли туяннӑ апатҫимӗҫ те "ураланнӑ".

Вӑрӑсем ҫывӑрмаҫҫӗ ҫав, тимсӗр ҫынна инҫетренех асӑрхаҫҫӗ. 28 ҫулти водитель машина алӑкне питӗрмесӗр хӑварнӑран меллӗ самантпа епле усӑ курмӗҫ? Вӑрӑ хӑйӗн ӗҫне тунӑ. Юрать машинине нимӗн юлмиччен "хывӑнтарман".

## Пурнӑҫӗ татӑлнӑ

Ҫирӗм ултӑ ҫулти водитель, "Мазда 6" автомашинӑпа пынӑскер, ахӑртнех, таҫта васканӑ. Хирӗҫ килекен автотранспорт ҫулӗ ҫине вирхӗнсе тухсан "Рено Логан" машинӑна пырса тӑрӑннӑ. Руль умӗнче ларнӑ полици ӗҫченӗ ҫакна пула хытах аманнӑ. Ӑна больницӑна та илсе ҫитереймен, вӑл инкек пулнӑ вырӑнта ӗмӗрлӗхех куҫне хупнӑ. "Мазда" водителӗ тата машинӑри виҫӗ пассажир суранланнӑ.

Авари сӑлтавне тӗпчеҫҫӗ. Чӑваш Республикин Шалти ӗҫсен министерствин тӗрӗслевӗ ӗҫ-пуҫа туллин уҫса памалла.

## Хӑрушӑ вырӑнта асӑрханмаллах

"Мускав-Ӗпхӳ" автоҫулӑн Ҫӗрпӳ районӗпе иртекен сыпӑкӗнче, 672-мӗш ҫухрӑмӗнче, тӑтӑшах инкек ҫине синкек килсе тухать. Хӑрушӑ вырӑн пулнине кура кунта хӑвӑртлӑха сехетре 60 километр таран чакармаллине палӑртнӑ, ятарлӑ паллӑ вырнаҫтарнӑ. Анчах водительсем ҫав-ҫавах асӑрханулӑха ҫухатаҫҫӗ. Пӗлтӗр кунта пилӗк инкек пулнӑ, вӗсенче виҫӗ ҫыннӑн пурнӑҫӗ татӑлнӑ, пиллӗкӗшӗ аманнӑ.

Иртнӗ вырсарни каҫ (19 сехет те 15 минутра) 52 ҫулти водитель, машинипе Владимир облаҫӗнчен килекенскер, хирӗҫ пыракан транспорт ҫулӗ ҫине сиксе тухнӑ. Ҫав вӑхӑтра Куславкка районӗнчи вӑтӑрти арҫын машинипе Шупашкара кайма тухнӑ. Ют регион водителӗ унӑн транспорчӗ ҫине пырса кӗнӗ. Водительсене иккӗшне те, ҫавӑн пекех пилӗк пассажира больницӑна ӑсатма тивнӗ. Виҫӗ ҫулти арҫын ачапа ҫулталӑк ҫурӑри хӗр ача та аманнӑ.

## Ҫиччӗрен пӗрне те тӗрӗслеттермен

Чӑваш Республикин патшалӑх техника надзорӗн Ҫӗрпӳ тата Сӗнтӗрвӑрри районӗсемпе ӗҫлекен инспекторӗ нарӑс уйӑхӗнче "Аксаринское" (Сӗнтӗрвӑрри районӗ) ял хуҫалӑх кооперативӗнче пулнӑ. Хуҫалӑхра техникӑна ӗҫлеттермелли йӗркене пӑхӑннине тӗрӗсленӗ. Инспекцие юлашки хут панӑ отчетпа хуҫалӑхӑн 7 техникине регистрациленӗ. Анчах та пӗлтӗр вӗсенчен пӗрне те тӗрӗслеве илсе тухман, юсавлӑ е юсавсӑр пулнине палӑртма май килмен. Инспекцие тӑратнӑ ятарлӑ хута ӗненес пулсан, хуҫалӑх ӗҫлемен иккен. Ҫакӑ яваплӑхран хӑтармасть. Тӗллевлӗ тӗрӗслев хыҫҫӑн саккунпа килӗшӳллӗн "Аксаринское" ял хуҫалӑх кооперативӗн ертӳҫине пин тенкӗлӗх штрафланӑ.

Кӑларӑма
Ирина НИКИТИНА хатӗрленӗ.

Кӑларӑм Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви пулӑшнипе тухса тӑрать.

# Тĕрĕ ытамĕнче

Тĕрĕ-çĕвĕ ачаранах кăсăклантарнă ăна. «Ферма хĕрĕсем тĕрленине тантăшсемпе сăнама юрататтăмăр, – аса илет иртнине Лидия Архипова. – Кайран хамăр та йĕппе çип тытнă, вăрттăн тĕрлеттĕмĕр. Ĕçе вĕçлесен анне тин асăрхатчĕ. «Кам тĕрленĕ?» – кăсăкланса ыйтатчĕ. «Эпĕ», – теттĕм хĕпĕртесе. Тĕлĕнетчĕ хăй».

Малтанах хĕресле тĕрлеме вĕреннĕ хĕр, каярахпа – кăлачăпа. Елчĕк тăрăхĕ авалтанах тĕрĕ ăстисемпе пуян пулнă. Аслă Елчĕкре те ку енĕпе пултаруллă çын нумай. «Виталий Адюков юрăç-композиторăн аппăшĕ Зина хитре ӳкеретчĕ. Чечек, кăвакарчăн сăнарлатчĕ пир çине, – малалла тăсать сăмахне хĕрарăм. – Инкесем Александрăпа Зинаида Вастуловăсем тĕрлеме ăста. Халĕ те аллисенчен йĕппе çип ямаççĕ».

Лидия Арсентьевна Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче 41 çул ĕçленĕ. Халĕ – тивĕçлĕ канура. Юлашки вăхăтра вăл чăваш тĕррипе кăсăкланма тытăннă. Тĕп хулари Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Çемье вулав центрĕ çумĕнче йĕркеленнĕ «Тĕрĕ тĕнчи» клуба çӳреме пуçланă. Ăна Надежда Кузнецова ертсе пырать. Сăмах май, ăстасем тĕрлĕ курава хутшăнса малти вырăнсене йышăнаççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем республикăри Халăх пултарулăх çуртĕнчи «6х7» галерейăра ятарлă курав уçрĕç.

«Тĕрлеме юрататăп. Тепĕр чухне çур çĕр иртиччен ларатăп. Юрать упăшка мăкăртатмасть. Ман ӳсĕмсемпе вăл та савăнать, куравсене çӳрет. Тĕрĕ маншăн – чун киленĕç. Ĕçленĕ май канатăп, – сăмах ваклать хĕрарăм. – Çамрăк чухне чăваш тĕррине вĕренме май пулмарĕ. Ватăлсан та пулин ăна алла илнишĕн савăнатăп. Хамăн ăсталăха мăнуксене вĕрентесшĕн».

Тĕрлĕ çиппе илемлетнĕ пире тăван-пĕтенне, тус-юлташне парнелеме кăмăллать вăл. Илем тĕнчине лайăххăн ăнланма ăна мăнукĕ Маша пулăшать. Вăл Шупашкарти ӳнер училищинче вĕренет. Эппин Лидия Арсентьевнăн ĕçне малалла тăсакан пурри иккĕлентермест.

**Валентина МАКСИМОВА.**





С. Журавлев сăн ӳкерчĕкесем.



# Извещение о проведении аукциона на право заключения договоров аренды

Автономное учреждение Чувашской Республики "Издательский дом "Хыпар" Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в открытом аукционе на право заключения договоров аренды (далее - аукцион) объектов недвижимости, являющихся государственной собственностью Чувашкой Республики.

**Почтовый адрес, номер контактного телефона аукционной комиссии:** Автономное учреждение Чувашской Республики "Издательский дом "Хыпар" Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики: 428019, г. Чебоксары, ул. пр. И. Яковлева, д. 13

**Контактное лицо:** Степанов Эдуард Вячеславович, начальник службы обеспечения- юрисконсульт, тел.: 89674780612

**Информация о проведении аукциона:**

Для участия в аукционе заявитель должен предоставить заявку установленного образца. Заявки для участия в аукционе принимаются в **616 кабинете** по адресу организатора аукциона со дня размещения его в сети интернет на сайте http://torgi.gov.ru

Срок окончания приема заявок на участие в аукционе **"31" марта 2014 г. в 16-00 часов.** Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д.13, каб. 616, а также в сети интернет на сайте http://torgi.gov.ru

**Требования к участникам аукциона:**

В аукционе может принять участие любое юридическое лицо на условиях, предусмотренных документацией об аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе в соответствии с требованиями, установленными документацией об аукционе, состоится на заседании комиссии **"01" апреля в 09-00 часов** по адресу организатора аукциона.

Аукцион проводится в присутствии членов комиссии и участников аукциона **"14" апреля в 09-00 часов.**

Победителем аукциона признается участник аукциона, предложивший наилучшие условия, определяемые в порядке, предусмотренном аукционной документацией.

Протокол аукциона подписывается всеми присутствующими членами комиссии в день аукциона.

Договор аренды с победителем аукциона должен быть подписан не позднее чем через 10 рабочих дней со дня подписания членами Комиссии протокола аукциона.

# Çула тухрăм Ямала, Атăл юлчĕ хыçала

***"Чăвашсем Инçет Çурçĕре кайса ĕçлени çинчен пĕрре мар илтнĕ. Ун пирки хаçатсенче питех çырмаççĕ. Пирĕн районти 50-55 çулсенчи арçынсем унта темиçе хут кайса килни, специальноç çуккисем те укçапа таврăнни хăйне май кăсăклă. Çавсем çинчен каласа парсамăр, тархасшăн, мĕншĕн тесен мăшăрăм чуна илет, эс чăлах-им, ыттисемпе тан ĕçлейместĕн-им тет. Каяс шухăш пур, çырса кăтартăр".***

***П.САДОВНИКОВ, Етĕрне районĕ.***

Вулакан ыйтăвне тивĕçтерер. Муркаш район çыннипе Николай Степановпа курса калаçма май килчĕ. Хаçат валли сăн ӳкерттерме сăпайлăхĕ хушмасть, çапах чăвашсем Ямал-Ненец тăрăхĕнче мĕн ĕçлесе пурăнни, хăйсене епле тыткалани çинчен каласа пачĕ:

– Эпĕ хам та аллă урлă каçнă, Мускав стройкисенче яш-кĕрĕмпе тан ĕçлеме хевте çитмест. Пирĕн ушкăнра Етĕрне, Муркаш çынни чылайăнччĕ. Етĕрнесем пĕрмай мухтанатчĕç: "Инçет Çурçĕре эпир пуçласа çул хывнă, сирĕн пире пур енĕпе те итлемелле", – пуçне каçăртнă хăйсем. Кунта та "дедовщина" тымар янă-и? Эп шĕшлĕ аври умĕнче пуçа пĕкме хăнăхман, хăраса тăмастăп. Тӳрех çапла тавăртăм:

– Ну, кайса килнĕ Çурçĕре, аван тейĕпĕр, вара халь кăкăр çапмалла-и? Эпир те çитсе курăпăр.

Пуйăса ларсан йĕкĕтсем шурă эрех туртса кăларчĕç, ирхинех вĕсенчен мухмăр шăрши касатчĕ. Вĕсен ушкăнĕнчи ман çулсенчи кукша пуçлă арçынни çеç айккинерех ларать, хушăран вакун вĕçне чĕлĕм туртма тухать. Паллашрăмăр – Николай ятлă. Хăй çав тери мĕшĕлти, çӳлти çӳлĕк çине хăпараймастăп, эс улăх терĕ.

Çурçĕр чукун çул станцийĕсен ячĕсем хăйне евĕр: Чум, Сейда... Сейда станцийĕнче пуйăс сехет ытла тăнипе усă курса вырăнти поселока пăхса çаврăнтăмăр. Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-60-мĕш çулĕсенче тунă барак çуртсенче паян та пурăнаççĕ-мĕн. Укçа лайăх ӳкнĕрен тытăнса тăраççĕ-тĕр. Картишĕнчи кивĕ "Москвичсемпе" "Жигулисене" юр хупланă, кабина тăрри çеç курăнать. Тимĕр-тăмăр купи ĕнтĕ. Тимĕрĕ таçта та сапаланса выртать. Пирĕн патра пулсан вĕсене туххăмрах пуçтарса йышăну пунктне леçĕччĕç. Кунта хуçа çук пулас.

Тахăш станцире вакуна çамрăк хĕрарăм кĕрсе ларчĕ. Пирĕн кукша Микула ăна куçĕпе тĕсесе илчĕ те унпа юнашар вырнаçрĕ. Вырăс майри кăштах кăмăлсăрланчĕ. Микула хĕрарăм чунне çемçетме сăмах тупрĕ:

– Сывлăх сунатăп, эпĕ сире кансĕрлемĕп. Ăçталла çул тытатăр? Аллуна парăр-ха, юмăç пăхма ăста эпĕ.

Тĕлĕнтерет ку ват супнă. Çапах вырăс майри аллине тăсрĕ.

– Сирĕн çемьере пысăк хурлăх, – ун аллине тĕпчесе хăйĕн пуçне çĕклерĕ кукша. – Аннӳне пытарса килетĕр. Маларах ун йăмăкне юлашки çула ăсатнă...

– Ăçтан пĕлетĕр эсир? – пӳлчĕ ăна хĕрарăм.

– Ал йĕрĕсем тăрăх вулатăп, хĕрĕм, – çапла каларĕ те юмăç каллех чĕлĕм мăкăрлантарма кăштăртатрĕ.

Чăнах та, пирĕн ушкăнра кам кăна çук пулĕ: паян-ыран пенсие тухаканни те, тин çеç салтакран таврăнни те. Ытларахăшĕ тури районсенчен.

– Çурçĕрте мĕн ĕçлесе пурăнатăр?

– Комири шурлăхлă вырăнсенче пысăк диаметрлă газопровод хываççĕ. Техника çӳретме çул кирлĕ. Çавăнта ячĕç чăвашсене. Тайга варринче вахтовиксен поселокĕ вырнаçнă. Ултшар çын пурăнакан бытовкăсем питĕ хăтлă. Вырăн тавраşне кашни эрнере улăштараççĕ. Столовăй, медпункт, мунча-сауна пур. Электричество çутине дизель агрегатсем парса тăраççĕ, çавăнпа вĕсене çĕрле те сӳнтермеççĕ. Пĕррехинче столовăй патĕнче черетре тăраттăмăр, тăван чĕлхепе пупленине илтнĕ пĕр хĕрĕхри арçын пырса тăчĕ:

– Апла эсир Чăвашран, эпĕ кунта дизелистра ĕçлетĕп, хам Етĕрне районĕнчи Кивьял Шăматран. Советски ялĕнчен инçе мар, – тет Краснов хушаматлăскер. – Укçа енчен кӳрентермеççĕ кунта, уйăхне 30-35 пинрен кая илмен. Анчах алла памаççĕ, тӳрех банк счечĕ çине куçараççĕ. Карточкăпа илме пулать-ха, тăккаланас мар.

Тĕнче хĕрринче ентеше тĕл пулнине паллă тăвас шухăш çуралчĕ хăшĕпĕрин. Краснов хăлхаран пăшăлтатать: "Кунта – "типĕ саккун", теприсем инçе рейссене çӳрекен водительсенчен хаяр шĕвек тупкалаççĕ. Анчах ӳсĕр çӳрекене кураймăр. Тытсан тӳрех кăларса яраççĕ".

Суймасть вăл. Чăвашсен пĕр ушкăнĕ урăх объекта лекнĕччĕ. Ачасем кĕсье телефонĕпе çыхăнса калаçрĕç. Пĕрисем эрехрен хăпайман-тăр: çиччĕшне киле пуçтарăнма хушнă. Карланкине чарайманнисем пирĕн ята яраççĕ вĕт.

Вахта хăшĕсен 45 куна е икĕ уйăха тăсăлать. Кун йĕрки çирĕп. Ирхи çиччĕре апатланатăн та саккăр валли вахта машинипе леçеççĕ. Çул кирлĕ терĕм. Асфальт сармаççĕ унта. Вак чулпа хăйăр хутăшне шыв яман пленка çине илсе килсе пушатаççĕ. Каток пусарса хытарать. Тĕрĕссипе, пĕтĕм йывăр ĕç калăпăшне техника пурнăçлать. Экскаваторсемпе бульдозерсем Японире туса кăларнисем. 30-40 тонна тиекен самосвалсен урапи çын çӳллĕш, вĕсене Финляндире туяннă. Механизаторсем унчченхи пĕтĕм Совет Союзĕнчен пуçтараннă: украинсем, беларуçсем, пушкăртсем, черкессем...

Кожымри вахта поселокĕнче пурăннă чухне пирĕн бытовкăна пĕр черкес пырса вырнаçрĕ. Хурмал тесе чĕнеççĕ. "Инçетрен килнĕ, сирĕн патра ĕç тупма йывăр-и?" – тĕпчетĕп эпир. "Ӳркенменнисем валли ĕç таçта та пур, укçине сахал тӳлеççĕ, – тет вăл. – Лайăх пулăхлă çĕрсене влаçра лараканcемпе "укçа миххисем" тытса илчĕç. Выльăх тытса пайтине кураймăн. Сирĕн хресчен хăйне аван туять-и?"

Тем каламалла ăна. Ĕç укçи çырлахтарнă пулсан чăвашсем тĕнче касса çӳремĕччĕç. Халь ялта ĕне тытни усăллă. Хĕлле литр хакĕ 23 тенке те çитнĕччĕ. Çулла чакать. Топливо, техника хакĕ пĕр шайлашăра пулманнипе хресчен хăйне тивĕç тупăш илеймест-çке. Аякра шапашра çӳресе тем те тӳссе курнă. Халăхĕ чăннипех ĕçчен пирĕн, анчах культура тени çитсех каймасть, çын хутшăнăвĕсенче пĕр-пĕрне хисеплеместпĕр. Акă пĕр тĕслĕх çеç. Кадрсен пайĕнче кирлĕ хутсем хатĕрленĕ хыççăн пире ĕç тумĕ кайса илме хушрĕç. Кладовщица сăнпитне курасчĕ сирĕн. Склада черетпе кĕрес вырăнне алăкран вăтăр çын вирхĕнсе кĕрет те йăлтах айăн-çийĕн çаврăттарать.

– Ну-ка, эсрелсем, тасалăр кунтан! – сухăрать сехри хăпнă мăнтăркка майра. Унтан çи-пуç тултарнă темиçе михĕ ывăтрĕ урама. – Суйлăр, сире унччен тăханни те çырлахтарĕ. Сурăх кĕтĕвĕ пек çӳретĕр, ăçтан персе антăр эсир?

– Чăвашран, – пысăк айăпа кĕнĕн хуравлатпăр эпир. Хамăра тăрлавсăр тыткаланипе намăс куратпăр-çке.

Шупашкарта тата районсенче Инçет Çурçĕре ушкăн пухса яракан ятарлă çынсем пур. Ĕçпе тивĕçтерекен хуçасем çав шаннă çынсене мĕн чухлĕ тӳленине пĕлместĕп. Ман ĕç мар ку. Чи кирли – йышăнакан организаци укçана счет çине чиперех куçарса пани. Икĕ уйăх тăрмашнă хыççăн 60 пин таса укçа кĕни кăмăла çĕклет. Анчах киле çитсен каллех тӳнтер енсем çиеле тухаççĕ. Пĕри ĕçке ярăнать, тепри пĕтĕм ял халăхне шăварать тата ыт.те. Юта кайса тара кĕрĕшекене чыс тумасть ку. Çапла вĕт?

Ямал ĕçкĕçсене хапăл мар. Тата акă мĕн: пенси çулне çитнисене каялла янă тĕслĕхсем пур. Инçе çула тухиччен пурте сывлăха тĕрĕслеттерессĕ, СПИД анализĕ те памалла.

**Григорий СЛАВИН çырса илнĕ.**

# Çĕртен писмесĕр çутта тух


Геннадий Ямуков

***Ял мĕншĕн пĕтсе пырать? Мĕншĕн çамрăксем унта юласшăн мар? Ĕç çукки пĕтерет тенине пĕрре мар илтме тивет манăн инçетри пĕчĕк ялсенче пулнă май. Вăрмар районĕнчи Кĕлкешре пурăнакан Геннадий Николаевич Ямуков çакăнпа пач килĕшмест. Эпĕ ăна ăнланатăп. Итленĕçемĕн çак çынна ытларах хисеплес килет. Çĕнĕлĕх çук унăн сăмахĕсенче, çутă пурнăç чăнлăхĕ пур.***

### Усăсăр ĕçлемен

Çĕртен писсе эпир çутта тухасшăн. Ялта çемьене тăрантарма, çурт-йĕр çĕклеме ĕç çук тетпĕр. Хамăра хамăр улталатпăр иккен. Кахалланма, наянланма е хамăрах вĕренсе пыратпăр, е паянхи пурнăç хистет. "Ял çыннисем çĕр улми миххине йăтнинченех палăрать çакă. Вăтăр килоллă михĕсене çамрăкрах чухне, иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче, машина çине пĕчченех çĕклесе хураттăмăрччĕ. Халĕ 40-45-ри арçынсем ăна иккĕн йăтаççĕ", – тет Геннадий Николаевич.

Шурă кĕпе, хитре костюм тăхăннă, галстук çыхнă яштака арçын йĕтем çине чаплă машинипе вĕçтерсе çитнĕрен вăл хура ĕçе чунпа парăнни малтанах иккĕлентерчĕ те. Ял хуçалăхĕ çинчен калаçса кайсан çĕр çине аслă пĕлӳллĕ специалист куçĕпе пăхать тесе шухăшлани те чăна килмерĕ. "Аслă вĕренӳ заведенийĕ пĕтермен эпĕ. Ашкăнчăкрах пулнă, шкул хыççăн ниçта та каяс темен. Вĕренме халĕ те кая юлман ĕнтĕ. Анчах мана карьера илĕртмест. Депутат мандачĕпе çӳретĕп пулин те. Шутласан, вăл та кирлĕ мар. Мĕнпе пулăштăр вăл?" – пĕрре тĕлĕнтерчĕç, тепре ял пурнăçне, çĕр ĕçне урăхларах хаклама май пачĕç унăн сăмахĕсем.

Кирлĕ ăса Геннадий Николаевич ашшĕнчен (вăл хăй вăхăтĕнче ертӳçĕ пулнă) илнĕ. 1991 çултанпа тытса пырать вăл фермер тилхепине. Нумай вулать, кăсăкланать. Ĕçре ăна тăван шăллĕ пулăшать. Çĕр çинче ĕçлесе йĕркеллĕ пурăнма май пуррине фермер пĕр иккĕленмесĕр ĕнентерет. Тĕш тырăпа çĕр улми ӳстерет вăл. Нихăш çул та усăсăр ĕçлемен. Çĕре хисепленĕрен ăна çĕр турриййĕ пулăшать тейĕн. Пуçтарса илнĕ çĕр улмине сутаймасăр кăларса тăкни, сая яни пулман. Пахалăхлă чĕр тавара вырнаçтарма йывăр мар иккен. Ямуков ӳстерекен çĕр улми Поляр унки леш еннех ăсанать. Сутма малтанах унта хăй çӳренĕ. Туянакансене аван пĕлсе çитнĕрен халĕ укçи килсессĕн чĕр тавара вакунпа ăсатать, хăй кайса çӳремест. Кĕркунне улма уйĕнчен йывăр тиевлĕ машина татăлмасть, "иккĕмĕш çăкăра" инçете турттаракансем килсех тăраççĕ. Çĕр улми пур енчен те килĕшнĕрен мар-и çав. Пĕлтĕр Чул хуларан 60 тонна Беларуç сорчĕсене илсе килнĕ. Халăх ăна лайăх тутишĕн ырлать, тухăçĕ те фермера савăнтарнă.

Иртнĕ çул çĕр улми 300 гектар йышăннă. Кăçал лаптăк пĕчĕкрех пулĕ. "Вăрлăх сахалрах пулнăран чакарма тивет. Пĕлтĕр çурла уйăхĕнче кăларнă çĕр улмине йăлт сутрăмăр. Вăрлăха каярах пулса çитекеннинчен хăварма шухăшланăччĕ. Çанталăк çумăра кайнăран паха вăрлăх кирлĕ чухлĕ хатĕрлейменрĕмĕр. Куртăр пулĕ, вăрлăхăн пĕр пайне сутатпăр, ун вырăнне çĕнни туянасшăн", – пĕлтерет Геннадий Николаевич.

### Тăрăшакансемшĕн меллĕ вăхăт

Унăн шухăшĕпе ял хуçалăхĕнче ĕçлеме халĕ питĕ меллĕ, ӳркенмелле мар çеç. "Туса илекен продукцие вырнаçтарма хаксем тивĕçтереççĕ. Çунтармалли-сĕрмелли материал хакланни ура хурать теççĕ. Икĕ çул каялла солярка паянхинчен (24 тенкĕпе сĕнеççĕ) икĕ тенкĕ кăна йӳнĕрехчĕ. Тепĕр тесен, çунтармалли-сĕрмелли материал пирĕн чĕр таварăн хăй хаклăхне питех витĕм кӳмест. Удобренин витĕмĕ пур ĕнтĕ. Кăçалтан ăна туяннăшăн субсиди те памаççĕ, анчах хальлĕхе вăл пĕлтĕрхинчен йӳнĕрех. Вăрлăха имçамламалли, çум курăка пĕтермелли хатĕрсем илме, чăн та, нумай тăкакланмалла. Вĕсене хатĕрлемелли хутăшсем Европăран килеççĕ. Препаратсем 5-7 процент хакланчĕç пулсан та вĕсемсĕр май килмест", – палăртать фермер.

Çĕре, çанталăка чунĕпе туяс-сисес туртăм пур унăн. 2010 çул шăрăх килчĕ. Шутламантуман çĕртен шăп çав çул шăвармалли комплекс туяннă. Унччен малтан вăл ăна курман та, унпа кăсăкланман та темелле.

Çĕр улмисĕр пуçне юлашки вăхăтра тĕш тырăпа ĕçлеме кăмăллать Геннадий Николаевич. Пĕлтĕр 1 пин гектар çинче тулăпа урпа ӳстернĕ, гектартан 30 центнер илнĕ. Çакна кура кăçал лаптăка пысăклатасшăн. Çавăнпах пĕлтĕр çĕнĕ комбайн, трактор, ытти техника туяннă.

Çак кунсенче хуçалăхра вĕр çĕнĕ сеялка, шăвармалли агрегат хушăннă. Çур акине тухма удобрени, çунтармалли-сĕрмелли материал тата ытти те хатĕр. Кăçал "иккĕмĕш çăкăра" упрама пысăк хуралтă тума пуçласшăн. Патшалăх субсидипе пулăшма шантарать. Панкрута тухнă ял хуçалăх предприятийĕн кивĕ хуралтисем паха таваршăн юрăхсăр.

### Кӳршĕ тăванран çывăхрах

Ĕçлес текен çын валли ĕç яланах пур. Çĕр тăрантарсассăн мĕншĕн килте лармалла е Мускава çӳремелле? "Ялти ĕçсĕрлĕх" текен ăнлав Геннадий Ямуковшăн кулăшла янăрать. Официаллă майпа ĕçсĕррисен йышне лекеççĕ те патшалăхран укçа илсе тăраççĕ. Ĕлĕкрех ĕçсĕр çапкаланса çӳрекенсене милици пуçтарса кайнă, саккунпа айăпланă вĕсене, аса илчĕ фермер. Паян çапла пулинччĕ.

"2-3 ĕне тыт, пăрушĕсем пулаççĕ. Çĕр улми ӳстер, ытти пахча çимĕç ларт. Ялта чиперех пурăнма пулать, – хăйĕн шухăшĕ патнех таврăнать Геннадий Николаевич. – Килти хушма хуçалăх тивĕçтермесен фермер ĕçне кӳлĕн. Сухаламан çĕр йĕри-тавра. Пĕчĕк çĕр лаптăкĕ çинче ĕçлекен фермерсене çăмăлрах та. Пысăк производствăна тӳрех кутăн-пуçăн çавăрма йывăр, пĕчĕккин майĕ ытларах. 30-40 гектар çинче ĕçлекенсене пĕлетĕп. Пĕрин виçĕ ывăл. Çĕр улмипе ĕçлесе пĕр çулта вăл виçĕ ывăлне те хваттер туянса пачĕ. Тепри те ачине виçĕ пӳлĕмлĕ хваттерпе тивĕçтерчĕ. Кредит та илмеççĕ вĕсем. Техники те кивĕ. Пĕр кунпа пурăнакансем темелле-ши? Тепĕр енчен пăхсан, ĕç çук тесе кахалланса лармаççĕ".

Геннадий Ямуков патĕнче хут тăрăх 22 çын ĕçлет. Тăван Кĕлкеш ялĕнчен 5-ĕн кăна, ыттисем кӳршĕри Çитмĕшрен. Кĕлкеш хăй вăхăтĕнче пысăк ял шутланнă. Халĕ ваттикачки 150 çын. Геннадий Николаевич асăннă тăрăх – çемьеллĕ çамрăксем хĕрĕх çултан иртнĕ. Мĕншĕн-ха Кĕлкешсем ялти фермер патĕнче ĕçлесшĕн мар? "Ăмсаннăран, – тет çĕр çынни. – Чăвашсен çавăн пек йăла пур".

Фермер патĕнче ĕçлекен Кĕлкешсем – трактористсем. Виталий Николаевич Архиповпа мухтанать ертӳçĕ. Пĕлтĕрхи кĕркунне вăл "Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" ята илнĕ. Хуçалăхра тĕрлĕ ĕç тăвакансем – Çитмĕшсем. Вĕсене тав тăвать Геннадий Николаевич.

Ял çыннисем вырăнти фермер патне ĕçлеме тухманнине чылай çĕрте асăрхатăн. Е хура ĕçрен хăраççĕ, е чăннипех те хура ăмсану ку.

Çĕр ĕçĕ Геннадий Ямуковран çын тунă. Çак тĕслĕх Кĕлкешсене вĕрентмелле, хавхалантармалла пек туйăнать. Çапла пулмалла та. Анчах паянхи пурнăçра урăхла. Тĕрĕс шухăшласа пурăнма темĕн чăрмантарать пире.

**Ирина НИКИТИНА.**


Валерий Ямуков

# «Тытатпăр та – тăватпăр»

**Вăрмар районĕнчи Чупайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта вĕренекенсем хăйсене «Иван Яковлев хунавĕсем» теççĕ. Аслă вĕрентекенĕмĕр халалĕсене ăша хывса пурăнаççĕ вĕсем. Кунтах çак ятпа ачасен пĕрлĕхĕ те ĕçлет.**

### Ырă йăла

Шкул картишĕнче ача-пăча сассипе пĕрлех ĕне макăрни те илтĕнет. Пĕлӳ çурчĕ 15 çула яхăн мăйракаллă шултра выльăх тытать. Маларах вара сысна та усранă. Халĕ кунта виçĕ чун: пушмак пăру, тин çеç пăруланă ĕне тата пĕчĕк пăру. «Пĕрремĕш хут пăруларĕ пулсан та сĕтне аван антарать, – терĕ ĕне пирки шкул директорĕ Анатолий Дмитриев. – Паллах, пĕтĕмпех суса илместпĕр, пăрăва та ӳстермелле-çке».

Вырăнти «Дружба» хуçалăх арканнă май халăха выльăх-чĕрлĕх сутма тытăннă. Сĕтсĕр юласран шикленсе шкул коллективĕ те пĕр ĕне туяннă. «Хамăрăн пулни аванрах. Ял халăхĕнчен ыйтасси мар. Вĕсене укçа-тенке вăхăтра памалла. Пирĕн вара майсем çукрах», – малалла тăсрĕ сăмаха Анатолий Кузьмич.

Вĕренекенсем кунне икĕ хутчен апатланаççĕ (30 тенке яхăн): пĕрремĕш тата тăваттăмĕш уроксем хыççăн. Ирхине ялан сĕтпе пĕçернĕ пăтă çиеççĕ. Кăнтăрлахи апат та пуян: салатран пуçласа пулă, ашпăш таранах.   Сĕт çеç мар, пахча çимĕç те хăйсем туса илеççĕ Чупайсем. 15 гектар çĕр пур. Унта çĕр улми, урпа, нумай çул ӳсекен курăк çитĕнтереççĕ. Ытлашшине сутаççĕ. «Пĕлтĕр çанталăк çумăрлă пулнăран çĕр улмине вырнаçтарма кăткăс пулчĕ, – сăмах ваклать Анатолий Кузьмич. – Ытти çул хирте машинсем черет тăратчĕç».

Сĕт юр-варĕ, пахча çимĕç хăйсен пулсан та ашшĕ-амăшĕнчен апатшăн укçа пухма тивет. Паянхи кун 30 тенкĕ хаклă мар, çитменнине икĕ хутчен апатланаççĕ. Хулари шкулсенче яшкапа çăкăр, чей 20 тенкĕ тăрать. Çамрăк организма вара витаминпа пуян апат кирлĕ.

Пахча çимĕç упрамалли хранилище те пур вĕсен. Унта 60 тонна таран вырнаçать. Хĕле валли хăяр тăварлаççĕ, купăста йӳçĕтеççĕ, салатпа варени, повидло хатĕрлеççĕ. Пахча çимĕç калчисене ятарлă теплицăра çитĕнтереççĕ. Каярахпа унта хăяр ӳстереççĕ. Шкул сачĕ те самаях пысăк. Иртнĕ çул пан улми ăнса пулнă. Çавна май тутлă çимĕçе ачасем те çисе савăннă, повидло та чылай тунă.

«Улмуççисем ватăлаççĕ, – пĕлтерчĕ директор. – Шкулпа сыв пуллашакансем çулсеренех икшер тĕп хунав лартаççĕ. Çак пулăм йăлана кĕчĕ. Иртнĕ çул вăтăр тĕп улмуççи хушăнчĕ, виçĕм çул – вăтăр улттă».

Хуçалăх тытни пулăшу кӳрет-ши? «Паллах, – пулчĕ хурав. – Пахча çимĕç, тыр-пул сутнă укçа-тенкĕпе юсав ĕçĕсене пурнăçлама май пур. Никамран та пулăшу ыйтмастпăр. Тытатпăр та – тăватпăр».

### «Мĕн тума кирлĕ хуçалăх?»

Каникул вăхăтĕнче сĕтпе ытларах ача сачĕ усă курать. Унта та 45 ача çӳрет-çке. Садик ĕçлемен кунсенче вара ăна патшалăха параççĕ. Укçи-тенкипе мĕн те пулсан юсаççĕ е пĕр-пĕр хатĕр-хĕтĕр туянаççĕ. Иртнĕ çул апатланмăша юсаса илемлетнĕ вĕсем. Кунта патшалăх панă укçасăр пуçне хăйсенне те хушнă. Çитес вăхăтрах хывăнса-тăхăнмалли пӳлĕме йĕркене кĕртесшĕн, алăксем улăштарасшăн. Алăра нухрат пулсан шухăш-ĕмĕте пурнăçлама та ансат.

Çуркунне çывхарнă май çур аки пирки те шухăшлаççĕ Чупайсем. Тыр-пула алласа хунă, çĕр лаптăкне кĕркуннех сухаласа хăварнă. Çĕр улми вăрлăхĕ те хăйсенех: ытларах «Невский», «Рамона» сортсене килĕштереççĕ. Ăна-кăна пурнăçлама техника çителĕклĕ.

Хуçалăх ĕçĕсене вĕренекенсемпе вĕрентекенсем пĕрле пурнăçлаççĕ. Ĕне выльăх патĕнче хуралçăсемпе тирпейлӳçĕсем ĕçлеççĕ пулсан, пахча çимĕç çитĕнтернĕ çĕрте – ачасемпе учительсем. Ĕç урокĕсенче, çуллахи практика вăхăтĕнче вăхăта усăсăр ирттермеççĕ. Унсăр пуçне ĕçпе кану лагерĕнче канакансем те уй-хирте, пахчара вăй хураççĕ.

5-мĕш стр. ➔

## «Хресчен сасси» – Вăрмар районĕнче

# Кивĕ Вăрмар



Ял хресченĕсем мĕн авалтан çĕр ĕçĕпе тăранса пурăннă: тыр-пул ӳстернĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, кирпĕч тунă, катка-пичке ăсталанă, кĕпе-тумтир çĕленĕ тата çăмарта хатĕрленĕ. Çавăнпа ăратлă чăх-чĕп кăларакан "Урмарская" фабрика шăпах çак ялта вырнаçнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар. Паян вăл район экономикине "сывлаттарать", халăхшăн ырă ĕç тăвать.

Кивĕ Вăрмарта яланах чăвашсем пурăннă. 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче кунта 3 шыв тата çил арманĕ, кĕрпе тумалли тата çăм таптармалли çуртсем, çăкăр-булка тата эрех лавккисем ĕçленĕ, потребительсен обществи тата кредитпа тивĕçтерекен юлташлăх пулнă. 1882-1907 çулсенче Гурий святитель тăванлăхĕн шкулĕ ĕçленĕ, 1909-1918 çулсенче земствăн пуçламăш шкулĕнчен пĕрремĕш пусăмлă ĕç шкулĕ пулса тăнă. Вулăс вулавăшĕ уçăлнă. 1919-1922 çулсенче вĕрен-кантра тăвакан "Кустканат" кооператив пулнă. 1922 çулта "Кăткă" ял хуçалăх юлташлăхĕ ĕçленĕ. Каярахпа вĕсен ячĕсем улшăннă.

1712 çулта ялта 105 кил шутланнă (193 арçынпа 241 хĕрарăм) пулсан, 2002 çулта 502 килте 1539 çын пурăннă - 755 арçынпа 784 хĕрарăм. Шкул, фельдшер пункчĕ, клуб, вулавăш, çыхăну уйрăмĕ, спорт площадки, стадион, 5 лавкка, суту-илӳ павильонĕ, пекарня пулнă.



Чăх-чĕп фабрикин ертӳçи Николай Петров



Галина Волкова чăх-чĕп пăхакан



Владислав Алексеев слесарь



Галина Михайловăпа Елена Иванова çăмарта суйлакансем



Станислав Петров слесарь



Елена Николаева чăх-чĕп пăхакан



Галина Алексеева аслă зоотехник

*С. Журавлев сăн ӳкерчĕкĕсем.*

4-мĕш стр.

«Мĕн тума кирлĕ сана хуçалăх?» – теççĕ тепĕр чух, – калаçăвне пĕтĕмлетрĕ Анатолий Кузьмич. – Эпĕ – ĕлĕкхилле ĕçлеме вĕреннĕ çын. Хамăр тăрăшмасăр çителĕклĕ пурнăçпа пурăнаймăн. Патшалăх укçа уйăрасса кĕтсе лармалла мар, мĕн вăй çитнĕ таран талпăнмалла. Çуркунне çур акине тухатпăр, кĕркунне çĕр улми пуçтаратпăр. Пурне те хамăршăн тăватпăр».

Хуçалăх тытакан пĕлӳ çурчĕ Вăрмар тăрăхĕнче текех çук. Йăлана пăрахăçласшăн мар вĕсем. Малашне те çак йĕркепех пурăнасшăн, ĕçлесшĕн.

**Валентина ПЕТРОВА.**



# Кахалланмасан – тăрантарать

1-мĕш стр.

Çĕр улмине, тыр-пула юлашки çулсенче районта çĕнетсех тăнă. Тĕслĕхрен, виçĕм çул çĕр улмин элита вăрлăхне – 62 тонна, тĕш тырăнне 541 тонна кӳрсе килнĕ, пĕлтĕр – 106 тата 732 тонна.

**– Тĕш тырăпа çĕр улмисĕр, пахча çимĕçсĕр пуçне фермерсене тата мĕн илĕртет?**

– Владимир Иванов, Ольга Иванова, Андрей Захаров горчица акаççĕ. Çĕре пулăхлатассишĕн çеç мар, вăрлăх туса илессишĕн те. Владимир Иванов фермер пĕлтĕр ăна 200 гектар акса вăрлăх çапса илчĕ. Александр Сапаркин кăçал вăрлăх валли кукурус акасшăн. Унашкал шухăшлисем тата пур. Кăçал ку енпе 30-35 гектар çинче ĕçлесе пăхасшăн.

Фермерсемсĕр пуçне Вăрмарти чăх-чĕп фабрики çĕнĕ культурăсем акать, вĕллесем тытнăран фацели, кăвак пыл курăкĕ (синяк) çитĕнтерет. Андрей Захаров фермер та фацелипе ĕçлет, вăрлăхне сутмалăх та хатĕрлет.

**– Николай Михайлович, калаçу пуçламăшĕнче эсир ӳркенмесен, тăрăшсан фермерăн аталанма майсем çителĕклине асăнтăр. Уççăнрах палăртмăр-ши?**

– Патшалăх çăмăллăхсемпе тивĕçтерет. Акнă е лартнă кашни гектар çинчи ял хуçалăх культуришĕн 250 тенкĕ субсиди парать. Элита вăрлăх туяннăшăн та тăкакăн пĕр пайне саплаштарать. Пĕлтĕр удобренипе наркăмăшлă химикатшăн та субсидипе пулăшнă. Кăçал, ахăртнех, кун пекки пулмĕ. Хамăр çĕр-шывра туса кăларнă машина-трактор тата шăвармалли техника туянсан та фермерсем субсиди илме пултараççĕ. Çĕр улми ӳстерекен Владислав Арманов фермер пĕлтĕр 6 млн тенкĕлĕх шăвармалли техника туянчĕ, тăкакăн пĕр пайне патшалăх тӳлерĕ. Иртнĕ çул районта вĕр çĕнĕ техника пĕтĕмпе 32 млн тенкĕлĕх илнĕ. Фермерсенчен Геннадий Ямуков хастар пулнă.

Хальччен усă курман çĕре пусă çаврăнăшне кĕртнĕшĕн (пушă выртакан çĕр районта 2888 гектар юлнă), акнă-лартнă тыр-пула страхланăшăн, çĕре пулăхлатнăшăн, ăратлă выльăх туяннăшăн, хăмла ӳстернĕшĕн тата ыттишĕн те фермерсен ял хуçалăх предприятийĕсем пекех патшалăх пулăшăвне илме май пур.

**– "Симĕс ылтăн" пахчисене çĕнĕ пурнăç паракан фермерсем пур-и?**

– Ку енĕпе хресчен хуçалăхĕ мар, Леонид Дмитриев ертсе пыракан "Агроресурсы" пĕрлешӳ ĕçлет. Юхăннă хуçалăхсен пахчисене хăй хӳттине илсе хăмла ĕрчетме тытăнчĕ. Пĕлтĕр 24 гектар çинче ӳстерчĕ, аван тухăç илчĕ. Икĕ гектар çинче çĕнĕ хунавсем лартса хăварчĕ. Кăçал та çавăн чухлĕ çĕнĕ пахча лартасшăн. Хăмла техникине "Агроресурсы" панкрута тухнă хуçалăхсенчен пуçтарнă, кирлĕ вăхăтчен упраса çитернĕ, юсаса хута янă.

**– Пĕлнĕ тăрăх – районти фермерсем патшалăх грантне тивĕçнĕ. Тĕш тырă, пахча çимĕç ӳстерекенсем пур-и вĕсен хушшинче?**

– Хальлĕхе выльăх-чĕрлĕх ытларах пултăр тесе тăрăшать пулĕ патшалăх. Пĕлтĕр Сергей Грачев грант укçипе сурăх ферми турĕ. Малтанхи çул та патшалăх пулăшăвне тивĕçнĕ фермерсенчен пĕри – выльăх усраканскер, тепри – пыл хурчĕ ĕрчетекенскер. Районти 50 фермертан çурри ытларахăшĕ агрономи енĕпе ĕçлет. Фермер ĕçне чи малтан пуçăннисем те çак йышрах-ха.

**Ирина НИКИТИНА.**

# Уçлăха ракетăсем яратпăр

## Çав вăхăтрах хресчене шанчăклă техникăпа тивĕçтерейместпĕр



**Хамăрăн аграри производствине аталантарас тата ял хуçалăхĕ валли машина туса кăларакан отрасле çĕклес вырăнне Раççей чикĕ леш енче çуллен 42 млрд долларлăх апат-çимĕç туянать. Çĕр ĕçлеме мантăмăр-ши е ал айĕнчи пуянлăхпа усă курма пĕлмеспĕр-ши? Çак ыйтусем тавра калаçу пуçартăмăр Раççей Ял хуçалăх Академийĕн паллă ăсчахĕпе, Патшалăх премийĕн лауреачĕпе Олег Марченкопа.**

**– Олег Степанович, патшалăх ял хуçалăхне хывакан укçа калăпăшне ӳстерсе пынине пĕлетпĕр. Шел пулин те, ун витĕмĕ сисĕнмест-ха.**

– Пур патшалăх та яла пулăшассине пысăка хурать. Калăпăр, Евросоюз тытăмĕнче акакан кашни гектар çĕр пуçне – 800 евро, Швеципе Японире 2000 доллар уйăраççĕ. Раççейре вара? Калама намăс: 15 доллар! Те кулмалла, те хурланмалла...

Çапах пулăшу виçине ӳстернипе çеç АПКра улшăну тăвайăмăпăр, пирĕн пĕрпĕринпе тачă çыхăннă, чăрмав кӳрекен сăлтавсем пур. Анăça тĕслĕхе хуракансене çапла каласшăн. Мала ӳкнисенчен вĕренни пăсмĕ. Тепĕр тесен, унти фермер мĕнле условисенче ĕçленине хăвăр кайса куртăр-и? Эпĕ, сăмахран, Америкăри 25 штата, 50 фермер патне çитсе килтĕм, уй-хирне мĕнле машинăсемпе сухаласа акнипе тĕплĕн паллашрăм. Тӳрех палăртмалла, вĕсен ĕç йăли-йĕрки пачах урăх, çут çанталăкĕ те расна. Раççейре тыр-пулăн тата пахча çимĕçĕн ытларах пайне çухатупа çыхăннă çĕр çинче туса илеççĕ. Çанталăк кашни çул тĕрлĕ килет, юлашки тапхăрта вăл уйрăмах "кутăнлашрĕ". Çавăнпа мĕн ӳстернине тăкаксăр пухса кĕртме ăнтăлакан хресчен ĕлĕкренпех йышпа (колхоз, совхоз, артель е кооператив) ĕçлеме хăнăхнă. Вара тырпул шăпишĕн, вăрлăхпа удобрени сутăн илессишĕн питех кулянмĕ вăл. Пĕччен сурсан типсе пырать, халăх сурсан кӳлĕ пулать тенĕ сĕм авалтан. Ку юнра ларать.

Çирĕм çул каялла "Фермер çĕр-шыва тăрантарĕ" лозунгпа пурин чунне хускатрĕç. Ял сăн-сăпатне çĕнĕ варкăш вĕрсе кĕртме тивĕç çынсем, çĕнĕ хуçасем тейĕпĕр, ура çинче çирĕп тăраççĕ-и? Статистика цифрисем иккĕленӳ çуратаççĕ. Раççейре 24 пин пысăк е вăтам ял хуçалăх предприятийĕ пĕтĕм продукцин 46,7 процентне хатĕрлет. Уйрăм çын хуçалăхĕсем (вĕсем пурĕ 22 млн) – 44,8 процент. 250 пин фермер тӳпи 8,5 процент кăна. Ытла та хавшак-çке çак юхăм, улпутсем пĕтĕм халăха ăçтан тăрантарĕç?

Çăкăр-тăвартан тату пуласси пысăк предприятисем кал-кал аталаннинчен килет, патшалăх пулăшăвĕн ытларах пайĕ вĕсене тивĕçет те. Паллах, хăватлисене хавхалантарнипе пĕрлех килти хушма хуçалăхра аш-пăш, сĕт-турăх туса илекен çинчен те манас марччĕ. Вĕсем валли пĕчĕк техника хатĕрĕ кăларассине çĕнĕ шая çĕклемелле. Ал вăйĕпе тăвакан ĕç калăпăшне чакарса пырасси – ял малашлăхĕпе çыхăннă тĕп ыйтусенчен пĕри.

**– Мĕн пытармалли, хресчен хамăрăн промышленноçран шанчăклă техника кĕтсе илеймерĕ. Çитес çулсенче лару-тăру улшăнĕ-ши?**

– Калама йывăр. 1991 çулхипе танлаштарсан техника паркĕ самай юхăннă. Тракторсен шучĕ – 5 хут, комбайнсем 6-10 хут чакнă. Хуçалăх хавшанипе 42 млн гектар çĕр çинче нимĕн те акмаççĕ, кĕтӳ кĕтмелли е утă çулмалли 60-70 млн гектар çĕре çын алли перĕнмен.

Раççей Ял хуçалăх академийĕн специалисчĕсен пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх – 2020 çул тĕлне АПКра тракторсен шутне 276 пинрен 900 пине çитермелле, 250 пинрен кая мар комбайн туса кăлармалла. Вырăх апачĕ хатĕрлекен (60 пин), çĕр улми кăларакан (30 пин) агрегатсен шутне те ӳстермелле. Кунсăр пуçне ӳсен-тăран, вăрлăх отраслĕсем ку чухнехи хатĕрхĕтĕрсĕр малалла каяймĕç.

**– Пархатарлă тĕллевсем пурнăçланасса ĕненетĕр-и?**

– Тӳррипе калас тăк – иккĕленӳ пур. 1991 çулта пирĕн промышленноç 158 пин трактор кăларнă, паян аран-аран 500 "хурçă ут" йăраланса тухать. Çав хушăрах чикĕ леш енче туса кăларнине кăсса кайса мухтатпăр. Çапла, пирĕн отрасль ытла та çаврăнăçсăр. Ял хуçалăх машинисем час-час ванаççĕ, тухăçлăхĕ тивĕçтермест. Тĕрĕссипе, ютран кӳнисем те кăлтăксăр мар. Апла пулин те хăш-пĕр хуçалăхра импорт техникине 70-75 процента çитернĕ, татах туянасшăн. Суту-илӳ политикине йĕркелекенсене хамăрăн машиностроени пуласлăхĕ вуçех кулянтармасть пулас.

Анăçран мĕншĕн юлса пынине ăнлантарма кирлех-ши? Вĕсен темиçе ĕмĕр каялла çирĕпленсе çитнĕ тытăм йĕркеленнĕ. Эпир ялта сăнав хыççăн сăнав ирттерсе хресчен кăмăлне пусартăмăр. Хамăрăн индустри аталанăвĕн çул-йĕрне пăрахăçа кăларчĕç. Çĕнĕ йышши, ялта питĕ кирлĕ хатĕр-хĕтĕр шухăшласа кăларма ăс çитет пирĕн, вĕсене "симĕс çутă" парасран темшĕн шикленетпĕр. Проектсене производствăра усă курма пуçличчен темиçе çул иртни – Раççей инкекĕ. Пĕтĕм чăрмавне çакăнта куратăп.

Мĕн тăвăн, пысăк пукан йышăнса ларакансене продукци калăпăшĕ ытларах кăсăклантарать вĕт. Пурнăçлама май çук тĕллевсем лартаççĕ те – ĕçĕ пĕтнĕ. Мĕнлерех ĕçлесе пымалли пирки пĕр сăмах та çук. Сăмахран, машиностроени отраслĕ валли кадрсем хатĕрлессине япăхтарса янă, техника училищисен ят-сумĕ анса ларнă. Çамрăксене ятарлă техника пĕлĕвĕ памалли программăсем ĕçлемеççĕ. Кирек епле çĕнĕлĕхе çын шухăшлавне улăштарниччен пуçламалла-çке.

**– Кун пирки çирĕм çул сăмах ваклатпăр ĕнтĕ...**

– Правительствăра профессионалсем çукки ура хурать. Мĕн тери хăватлă та анлă çĕр-шыв хăйне çимелĕх çăкăр туса илейменни – тĕнче намăсĕ. Кӳршĕллĕ Китай тĕслĕхĕ мĕне тăрать! 1,5 млрд чухлĕ халăх 94 млн çĕре сухаласа акать, выçă аптратмасть. 140 млн çынлă Раççейĕн акакан çĕр лаптăкĕ 133 млн гектар, 70 млн гектар çаран. Турă панă мулпа пĕлсе усă курмастпăр-çке, çĕр ĕç культури мĕнле шайрине пурте пĕлетпĕр. Китай çулталăкра икĕ хут вырса илет тени тӳрре тухма хăтланнипе пĕрех.

Яла çĕнĕ техника килме пуçласан, пĕлсех тăратăп, çĕр çинче ӳсĕмлĕ ĕçлес туйăм вăйланĕ. Çитес тапхăрта вырăхчĕрлĕх йышне виçĕ хут ӳстермелли майсем уçăлса пыраççĕ. Патшалăхăн апатçимĕç хăрушсăрлăхне çирĕплетессипе уйрăлми çыхăннă ку.

**Вера ЗЕЛИНСКАЯ çырса илнĕ.**

# Ырлăх-и е путлăх-и?

### Ютти шиклентерет

Çулталăк каялла Раççей Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацийĕн (ВТО) членĕ пулса тăчĕ. Нумай тавлаштарчĕ вăл, хăшпĕр экономист наци пуласлăхĕ хăрушлăхра, пире çука тăратса хăвараççĕ тени асра. Ку таранччен чĕр тавар туса кăларнă отрасле импорт хупласа хурасси шиклентернĕ. Ют продукцие чикĕ урлă каçарнăшăн пысăк пошлина хунипе кăна тытăнса тăнă агропромышленноç комплексĕ.

Анăç рынок саккунĕсемпе темиçе ĕмĕр каяллах пурăнма тытăннă, ку чухнехи çĕнĕ технологисемпе усă кураççĕ, патшалăх пулăшăвĕ питĕ витĕмлĕ – вĕсемпе епле тупăшăн? Тĕлĕнмелле пулин те пирĕн ял хуçалăхĕ пĕтсе лармарĕ: тыр-пул акатпăр, вырăх усраса сутатпăр. Хамăра тăрантармалăх та, юта ăсатмалăх та пур иккен. Çакнашкал пĕтĕмлетӳ тума пулать пĕр çул хыçа юлнă хыççăн.

Паян мĕн куратпăр? Доллара куçарсан импорт шайĕ 6 процент (аграри секторĕнчи инфляци шайĕ те çав виçе) çеç ӳснĕ. Чăх-чĕп, пăру ашĕ тата сахăр кăшманĕ туса илекенсен отраслĕсене хӳтĕлеме пултартăмăр. Чикĕ урлă каçарма пысăк укçа тӳлемеллине кура сахăр компанийĕсем пирĕн рынока кĕме тăхтарĕç. Пĕрчĕллĕ культурăсем акса тăвас ĕçре те çухату çукпа пĕрех. Калăпăр, 90-мĕш çулсенче Раççейре рис отраслне вуçех пăвса лартнăччĕ. Унтанпа ăна çĕклеме хевте çитертĕмĕр, продукци калăпăшне виçĕ хут ӳстерме май килчĕ. Ĕненетĕр–и е çук-и – паян 200 пин тонна рис ытти çĕр-шыва сутатпăр.

### Пĕрисем – тупăшпа, теприсем...

Сысна какайĕ туса илекенсемшĕн йывăр самана çывхарни пирки тĕрĕсех калаççĕ. Апат-çимĕç рынокĕнче тĕп вырăн йышăнакан продукци. Çитменнине тата импорт пошлинине пĕчĕклетрĕç. Лавккасенче какай самай йӳнелчĕ, çав хушăрах вырăха çитерекен тыр-пул, комбикорм хакĕсем хăпарчĕç. Продукци хăй хаклăхĕнче вĕсен тӳпи 70% яхăн. Америкăра е Европăра фураж хакĕ çав шайрах юлнă, вĕсемшĕн аш-пăша Раççее килсе сутни тупăшлăрах. Пĕрисем – усăмпа, теприсем...

Ку инкек чи малтанах вăтам фермăсемпе уйрăм çын хуçалăхĕсене (чух-чухсен пĕтĕм йышĕн 40 процентне уйрăм çынсенче) пырса çапрĕ. Хресчен тăкак тӳсни куç кĕрет. «Çӳлтисем пирĕн терт-нушана курмаççĕ, вырăх тытакана выçă вĕлересшĕн», – çапла çырчĕç хаçатсем. Çак йĕркесене вуласан кирек кам чунĕ те çӳçенĕ. Правительство хресчен хӳхлевне илтрĕ пулас: вырăх апачĕн тăкакĕсене саплаштарма 79 млрд тенкĕ субсиди уйăрчĕç.

Çак ыйтăва тарăннăн тишкеретĕн те акă мĕн патне пырса тухатăн. Чăнах та, хак ылмашăнăвĕнче йĕрке çукрах пирĕн, анчах кунта ВТО айăппе курмастпăр. Шалти рынок хăйне евĕрлĕхне шута илмелле.

Хăватлă сысна комплексĕсем сыхланса юлни – пĕр япала. Ял çынни сыснаран хăтăлма тăрăшни – тепĕр япала. Пысăк агрохолдингсем производствăна малалла аталантарса продукци калăпăшне ӳстерсе пыраççĕ. Цифрăсем патне таврăнар. 2011 çулхипе танлаштарсан ял хуçалăх предприятийĕсенче сысна какайĕ туса илесси 30 процент ӳснĕ. Çулталăкра ют çĕр-шывран кӳнĕ какай виçи нимĕн чухлĕ те улшăнман, апла импортран шикленме пăрахмалла.

– Отрасле хурлăхлă шăпа кĕтет тесе палкакансем шăпланчĕç, – тет Раççейри аш-какай туса илекенсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Мушег Мамиконян. – Çирĕп хуçалăхсенче çĕнĕ проектсене ĕçе кĕртеççĕ, вĕсем çуллен 400 пин тонна (танлаштарма: Анăçран илсе килмелли квота – 450 пин тонна) продукци туса кăларĕç. Кăтартусене лайăхлатса пынипе пĕрлех яваплăх, тупăш ӳсет. ВТОна кĕни перекетлĕ те тухăçлă ĕçлеме хистерĕ.

### Ĕне сĕчĕ – чĕлхи çинче

Лавкка сентрисем йӳнĕ таварпа тулса ларасса кĕтрĕмĕр – кăлăхах. Хаклă йышши электроникăпа радиоаппаратурăсăр та пурăнайăпăр, кулленхи апат-çимĕç пирки пуплетпĕр. Сĕт-турăхĕ кашни кун кирлĕ-тĕр.

Паян Раççейĕпе сĕт мĕн чухлĕ суса илнине никам та тĕп-тĕрĕс калаймĕ. Отчетсене хушса çырас йăла пĕтмен. Статистика чухăн: сĕт отраслĕн калăпăшĕ 4,3 процент чакни çинчен асăнчĕç. Пĕтĕмлетӳсене хăвăр тăвăр. Сăмах май, ютран илсе килекен сĕт продукчĕсем – сыр, услам çу, йогурт, тăпăрчă – пирки пошлина çав шайрах юлнă. Паян ĕне тытни сысна самăртнинчен темиçе хут тупăшлăрах теççĕ. Татса калама хĕн. Çапах сĕт сутса пайтине куракан сахал мар.

Тĕслĕхе кӳршĕллĕ Беларуçе илĕпĕр. Унта патшалăх ял ĕçченне пысăк пулăшу панине пурте пĕлетĕр. Юлашки çулсенче вĕсем сĕт продукчĕсемпе Раççей рынокне ытлă-çитлĕ тивĕçтерме пуçларĕç. Хăйсемпе чикĕленекен регионсенче сентресене вĕсен сĕт-турăхĕпе тулса ларнă. Ӳркенмеççĕ, маттур тесе каласшăн. Эпир вара халсăр-им? Сăлтавне пирĕн хресчен юхавлăрах ĕçленинче шырани кăлăхах. Беларуçпе Раççей 2007 çулта Таможня пĕрлĕхĕ туса хучĕç, хаксене унпа килĕшӳллĕн йĕркелесе пыраççĕ.

Кĕтĕве çĕнетессипе ытти çулсенче тĕллевлĕн ĕçлемен, ăратлăха лайăхлатас ыйтăва паян та хакламаççĕ. Сĕт нумай антаракан ĕне туянма Европăна каятпăр-çке.

Çӳлерех Таможня пĕрлĕхĕ туса хуни пирки асăнса иртрĕм. Унта Казахстан та кĕме кăмăл турĕ. Мĕнле условисемпе илнĕ казахсене, хаксем пирки еплерех калаçса татăлнă, пирĕн ял хуçалăхĕ умне вĕсем мĕнле йывăрлăхсем кăларса тăратĕç – куна татса калаймăпăр. Çĕнĕ килĕшӳсем туни вырăх-чĕрлĕх отраслĕнче сисĕнмесĕр иртмĕ. Сăмахран, алăксене яриех уçнă хыççăн Беларуç пирĕн рынока сĕтçу продукчĕсем илсе килессине 30 процент ытла ӳстернĕ, апат-çимĕç импорчĕн пĕтĕмĕшле виçи 75 процента яхăн.

Анăçран кӳрсе килекен ял хуçалăх техникипе оборудовани пошлинине чакарнине хресченсем ырласа йышăнчĕç. Оборудование çĕнетнипе пĕрлех малта пыракан технологисене алла илмелли майсем уçăлаççĕ. Анчах аграри секторне хушма инвестици сахал пынипе нумай ырă шухăш пăчланни – пурнăç чăнлăхĕ. Экспертсем çитес çулсенче Европа çĕршывĕсенче аш-какай хакĕ ӳсесси çинчен калаççĕ. Пирĕн кайăк-кĕшĕк отраслĕ курăмлă утăмсем тăвать, чăх какайĕпе çăмартан пысăк пайне унта сутма пултаратпăр. ВТО унчченхи чăрмавсене сирчĕ, пурин те çаврăнăçулăх кăтартса ĕçлесчĕ. Тыр-пул ӳстерекене хӳтĕлесси – патшалăхăн тĕп тивĕçĕсенчен пĕри.

**Александр ФОМИН,**
**РФ Патшалăх Думин**
**аграри комитечĕн эксперчĕ.**

**Кăларăма Вячеслав ГРИГОРЬЕВ хатĕрленĕ.**

**Çут çанталăк**

# Çуркунне ир килĕ

Çанталăка сăнакансем пĕлтернĕ тăрăх – кăçал çуркунне ир килмелле. Пуш тата ака уйăхĕн çурриччен çумăр, йĕпе юр çăвĕ. Çав хушăрах сивĕ те хуçаланĕ. Ара, хĕл часах парăнасшăн мар-çке. Ака уйăхĕн виççĕмĕш вунă кунлăхĕнче вара çанталăк самаях ăшăтĕ, юр ирĕлсе пĕтĕ. Çу уйăхĕн пуçламăшĕнчех çуллахи тум çине куçма тивĕ. Ку уйăхра çумăр çусах каймĕ, ытларах типĕ çанталăк пулĕ.

Çу кунĕсем питĕ шăрăх пуласса тата вăраха тăсăласса пĕлтереççĕ. Авăнăн çурричченех типĕ те ăшă çанталăк тăрĕ. Чи шăрăх вăхăт – утă уйăхĕ. Вырăнвырăнпа сывлăш температури 38 градуса çити ўсĕ. Çапах та вăхăт-вăхăт çумăр та çăвĕ. Çĕр ĕçченĕшĕн Лаша çулталăкĕ тухăçлă пуласса шантараççĕ синоптиксем. Анчах пĕтĕмлетў тума иртерех. Пурăнăпăр – курăпăр.

# Вăрман – çĕр чăмăрĕн ўпки

**Пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери вăрман кунне палăртаççĕ. Ăна 2013 çултанпа уявлаççĕ. Çакăн пирки 2012 çулхи раштавăн 21-мĕшĕнче Пĕрлештернĕ Нацисен Организацийĕн тĕп Ассамблейи резолюци йышăннă.**

Вăрмана тата унăн пуянлăхне упраси – кашнин тивĕçĕ. Çĕр планетăра унăн пĕтĕмĕшле лаптăкĕ юлашки вăхăтра 38 млн тăваткал километрпа танлашать (тип çĕрĕн пĕрре виççĕмĕш пайĕ). Вĕсенчен 13 процентĕ çут çанталăкăн сыхлăх территорине кĕрет. Вăрман – пирĕн планетăн ўпки. Вăл пире уçă сывлăшпа, кăмпа-çырлапа, тĕрлĕ эмел курăкĕпе тивĕçтерет. Чĕр чун тĕнчишĕн тăван кĕтес шутланать. Çавăн пекех тăпра та çĕр пичĕн пахалăхĕсене упрать. Шел, тĕнчери вăрман лаптăкĕ кунсеренех чакать. Кашни çеккунтра çĕр çинчен 1,5 гектар çухалать. Çакă чи малтан халăх йышĕ ўснипе çыхăннă. Унăн ыйтăвне тивĕçтерес тĕллевпе йывăçа касма тивет. Экспертсем палăртнă тăрăх – юлашки 10 пин çулта этем 26 млн тăваткал километр вăрман пĕтернĕ. Унсăр пуçне ăна çулсерен пушар, тĕрлĕ хурт-кăпшанкă, чир-чĕр сиенлетет. Çакă çын пурнăçĕшĕн те, çут çанталăкшăн та япăх пулăм.



Уявăн тĕп тĕллевĕ – вăрмана упрасси, аталантарасси, кун пирки çынсене ăнлантарасси. Ахальтен мар асăннă кун кашни çĕр-шывра йывăç-тĕме сыхлас тĕлĕшпе акцисемпе мероприятисем, конкурссемпе куравсем йĕркелеççĕ. Обществăпа экологи организацийĕсен мероприятийĕсене irttерме влаç органĕсен представителĕсем пулăшаççĕ. Хăш-пĕр çĕр-шывра Вăрман кунĕ Йывăç кунĕпе пĕр килет. Çавна май садсемпе парксем çĕнĕ хунавсемпе пуянланаççĕ.

Уява пирĕн çĕр-шывра та хастар хутшăнаççĕ. Вăрман – Раççей пуянлăхĕ ун кунне. Чăваш Енре те анлăн палăртаççĕ ун кунне. Пĕлтĕрхи пекех шкулсенче кăçал та ятарлă уроксем irttерĕç. Вăл «Вăрман урокĕ» ятлă. ЧР Çут çанталăк министерствин ĕçченĕсем вĕренекенсемпе калаçусем йĕркелĕç. Хăшĕ-пĕри вара çунатлă туссем валли шăнкăрч вĕлли ăсталĕ.

### Пĕтĕмпех йывăç çинчен

- Пĕр йывăçран парне валли 600-650 хут тĕркемĕ хатĕрлеме пулать.
- 4 млн тонна хут хатĕрлеме 61,5 млн йывăç касмалла.
- Европăра çулсерен 31 млн тонна яхăн хут пĕтереççĕ.
- А4 форматлă пĕр хут листи хатĕрлеме 13-21 г паха йывăç кирлĕ, пĕр кĕнеке валли – 5 кг чĕр тавар.
- Махагон (хĕрлĕ) йывăçран кĕвĕ-çемĕ хатĕрĕсем ăсталаççĕ. Ун пек йывăç сайрални пирки тĕлĕнме кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен кĕвĕ-çемĕ ăстисем çулсерен хунаççĕ.
- Пĕр йывăç çулсерен вăтамран 100-700 кг таран кислород кăларать.
- Раççейри тайга Çĕр планета çинче чи пысăк вăрман шутланать.
- Амазонка вăрманĕ çулталăкра 120 млрд тонна кăмрăк йўçек газĕ çăтать.
- Тĕнчери чи пысăк йывăç (111 метр çўллĕш) – ялан ешерекен секвойя. Вăл Америкăри Калифорни штатĕнче ўсет.

# Кайăк тĕкĕпе те, ĕçĕпе те илемлĕ

Кайăкăн хуйхи-суйхи мăй таран! Шанчăклă та çирĕп, ăшă йăва çавăрмалла. Вăхăтра çăмарта тумалла, пусма лармалла, чĕп кăлармалла. Вĕсене кашни кун тăраниччен çитермелле. Лешсен вара чăннипех те хырăмĕсем тĕпсĕр тейĕн – çăварĕсене карса çеç лараççĕ. Кун каçиччен кайăк апат йăта-йăта, çунатне çĕклейми пулса çитет. Кунсерен çирĕм сехетрен кая мар ĕçлет вăл. Ирхи, кăнтăрлахи тата каçхи апат шыраса аллăшар хутлать. Шăнкăрч кун каçиччен чĕпписене ик çĕр хут çитерет. Шăна тытакан чăпар кайăк вара – пилĕк çĕр хут.

Чĕпписене вĕçтерсе ярсан та кайăксен хуйхи пĕтмест: вĕсене тăшманран хўтĕлеме, пытанма вĕрентмелле.

Кайăксем тĕпренчĕкĕсене тĕрлĕ меслетпе хăтараççĕ. Вăйлă кайкăр тилле е ăмăрт кайăка пĕчченех хăваласа яма пултарать. Чарлансем вара хăлата е тилле ушкăнпа тапăнаççĕ. Тăшманне курсан ăсан чееленет: чирлĕ е аманнă пек пулать. Кăрăпчак чĕпписене чĕрнипе йăтса тарать.

Куккук çеç чĕпписене тăрантармасть, вĕрентмест, хўтĕлемест. Çăмартине ют йăвана хурса хăварать те – нимле хуйхă-суйхă та çук унăн. Хăйĕн ачисене куçпа та курмасть. Лешсем те ăна амăшĕ вырăнне хумаççĕ.

# Çĕнĕ кĕнеке

Раççейри вĕçен кайăксене хўтĕлекенсен пĕрлĕхĕн Чăваш Енри уйрăмĕнчи орнитологсен ушкăнĕ «Чăваш Республикинчи вĕçен кайăксем. Пĕрремĕш том» кĕнеке кăларнă. Унта пирĕн республикăра тата кўршĕ регионсенче пурăнакан вĕçен кайăксен пурнăçĕ пирки çырса кăтартнă. Монографие сăн ўкерчĕксемпе пуянлатнă. Çавăн пекех сайра тĕл пулакан тата сахал йышлă кайăксем пурăнакан вырăнсене карттă тусах палăртнă. Кĕнеке аслă шкулта вĕренекен студентсемшĕн, преподавательсемшĕн, çавăн пекех шкулта ăс пухакан ачасемшĕн усăллă пуласса шанас килет.

# Сăнавсем

♦Йытă çĕр çинче йăваланни – ăшăтасса. ♦Йытă шур ути çисен – çанталăк йĕпесапана кайĕ. ♦Йытă шыва кĕрсен – çумăра. ♦Йытă юр çине выртсан ăшăтать. ♦Хура курак йăвине ларсан икĕ эрнерен юр кайĕ. ♦Хура курак таврăнсан пĕр уйăхран юр каять. ♦Курак кăнтăртан ир килсен çу кĕске килет. ♦Куккук вăрах аватсан кĕр вăрăма кайĕ. ♦Кушак кăмакара выртни – сивĕтессе. ♦Лаша тулхăрни – сивĕтессе. ♦Лаша выртсан ăшăтать. ♦Тиха вылясан çумăр çăвать. ♦Лĕпĕш нумай пулсан пахча çимĕç ăнмасть.

# Умра – шыв-шур тапхăрĕ

Ейў тапхăрĕ кăçал пĕлтĕрхи шайрах иртмеллине палăртаççĕ. Юр хулăнăшĕ вăтам, çитменнине вăл кăпăшка. Çавăнпа та хăвăрт ирĕлет. Çĕр те çур метртан ытлашши шăнманнине калаççĕ.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çурхи шыв-шур тапхăрне хатĕрленсе irttерме плансем тунă. Кашни çулах Çĕрпĕве ейў вăхăтĕнче хўтĕлеме тĕрлĕ ĕç пурнăçлатчĕç. Иртнĕ çул вара кунта хўтĕлев сооруженийĕсем тума пуçланă. Унта ĕç малалла пырать. Çав вăхăтрах айлăмра вырнаçнă кил-çуртсене шыв илес хăрушлăх пур. Вăл шутра Улатăр тăрăхĕнче те.

# Хурăн каснăшăн

Пăрачкав районĕнче пурăнакан 57 çулти арçынпа унăн 34 çулти ывăлĕ иртнĕ çулхи чўк уйăхĕнче «Çĕмĕрле вăрманлăхĕнче» саккунсăр майпа тăватă хурăна тĕпрен каснă. Вăрман аслă, тăватă йывăçпах сайралмĕ тенĕ пулас. Çав вăхăтрах вăл хăлхаллă пулнине шута илмен вĕсем. Хурăнсене вут-шанкă валли вакласа килне илсе таврăннă. Çавна май РФ вăрман фондне 18 пин тенкĕлĕх тăкак кўнĕ. Ашшĕпе ывăлне суд условий майпа 1 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварнă.

**Кăларăма**
**Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, пуш уйăхĕн 17-мĕшĕ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
20.30 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)

**Ытлари кун, пуш уйăхĕн 18-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ЫЛТĂН ÇЎПÇЕРЕН» (6+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
20.30 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)

**Юн кун, пуш уйăхĕн 19-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
19.00 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «НАОБУМ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)

**Кĕçнерни кун, пуш уйăхĕн 20-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
20.30 «ВЗЯТЬ И ПОЛЮБИТЬ». ДОКУМЕНТАЛЬНЫЙ ФИЛЬМ (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)

**Эрне кун, пуш уйăхĕн 21-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
00.00 «НАОБУМ» (12+)

**Шăмат кун, пуш уйăхĕн 22-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ПĔЧЧЕННИСЕНЕ ОБЩЕЖИТИ ПАРАÇÇĔ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
11.00 «ТУСЛĂХ ЙЫВĂÇĔ» (12+)
11.30 «ПОД ЗНАМЕНЕМ БОРЬБЫ С НАРКОУГРОЗОЙ» (12+)
17.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
17.30 «КАЧЕСТВО» (12+)
18.00 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
18.30 «АХ, КАКАЯ ЖЕНЩИНА!». ГОРОДСКОЙ КОНКУРС (12+)

**Вырсарни кун, пуш уйăхĕн 23-мĕшĕ**
9.00 «ЮБИЛЕЙНЫЙ КОНЦЕРТ, ПОСВЯЩЕННЫЙ 50-ЛЕТИЮ ТВОРЧЕСКОЙ ДЕЯТЕЛЬНОСТИ С.А. КОНДРАТЬЕВА» (0+)
17.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
17.30 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА!» (12+)
18.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
18.30 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (12+)
19.00 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
19.30 «УЙĂХ ТУЛНĂ КАÇ». ВИДЕОСПЕКТАКЛЬ (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Пуш, 12 – юн кун | Пуш, 13 – кĕçнерни кун | Пуш, 14 – эрне кун | Пуш, 15 – шăмат кун | Пуш, 16 – вырсарни кун | Пуш, 17 – тунти кун | Пуш, 18 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 7.15 | 7.12 | 7.10 | 7.07 | 7.04 | 7.02 | 6.59 |
| | анать | 18.47 | 18.49 | 18.51 | 18.54 | 18.56 | 18.58 | 19.00 |
| Кун тăршшĕ | | 11.32 | 11.37 | 11.41 | 11.47 | 11.52 | 11.56 | 12.01 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулли уйăх (21.07) | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 11-мĕш кун | 12-мĕш кун | 13-мĕш кун | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун |
| | | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче |

## ВУЛАВĂШ

Ангелина ПАВЛОВСКАЯ

# Урик аппа

### Калав

*(Вĕçĕ. Пуçл. 16 (2428) номерте)*

Янкăр уйăх ĕнтсе ярасла вут-кăваррăн çунса тăрать. Пӳртсенче краççын ламписем çунаççĕ. Çынсем çеç мар, çил те лăпланса çывăрма выртман-ха. Çурçĕр енчен вичкĕннĕн вăш та вăш сас килет, алăсене чĕпĕте-чĕпĕте илет. Кас-кас юра çавăрттарса хаяр йытă майлах пиншак аркине пыра-пыра туртать. Йĕри-тавра шăп. Çын утни-çӳрени те, йытă вĕрни те илтĕнмест. Пирĕн ялта кăшарни ларас йăла çук та, яш-хĕр чупкалани те сисĕнмест. Улах терĕ-ха, ку сивĕре урама тухас килмест. Килте лара пар, ĕçле. «Хамăр ăшă пӳртре-ха, — фермăри пăрусене хĕрхенсе ларатăп. — Юрать-ха чи пĕчĕккисене ялта килĕрен салатрăмăр». Фермăсем начар вĕт ун чух. Йĕри-тавра шăтăк-çурăк, кунĕпе çил ташлать. Улăмпа-мĕнпе питĕрем пекки тукалатпăр та — мĕн вăл. Вăтăр градуслă сивве улăм тытса чараять-и? Шăлсем шăнатчĕç вĕт. Сывлăша ăша çăтма хăрамаллаччĕ. Сăмса çунаттисем çеç мар, ӳпке çурăлать пуль теттĕмĕр. Кĕрĕкпе кăçатă хывса курман. Пĕчĕк пăрусене килĕрен салатса парас тесе ферма пуçлăхне мĕн чухлĕ анратрăмăр. Килĕшрĕç. Сĕтне фермăран парса тăчĕç. Хĕл каçса пĕр пăру та вилмерĕ çав çул. Кайран пире епле мухтарĕç. Аттепе анне те икĕ пăру ӳстерсе пачĕç. Чăмăр ӳсрĕç, пулă пек якаччĕ.

Вăт кĕтетĕп хайхи. Çук та çук Варвари. Ман телее, Матви пиччесен Маруççи килсе кĕчĕ.

Чухăнрах пурнатчĕç Маруççем. Пӳрт тулли ача-пăча. Ашшĕ ун чухнех сыпкалама пăхатчĕ. Ытлах хутшăнман эпир вĕсемпе. Маруç та хальччен килсех çӳремен.

— Пĕчченех ларатни вара? Аçусем кăшарни ĕçкине кайнă терĕç те. Ай, пӳрт ăшă вара сирĕн. Паян юмăç ямалла вĕт. Эп кунта улах тесе, — калаçрĕ Маруç.

— Юмăçĕ-мĕнĕ... Хывăн, иртсе лар. Варвари килеп тенĕччĕ те çитеймерĕ-ха. Улах кĕпĕртеттерес темерĕм. Ĕне те ыран-паян пăруламалла. Тен, кĕçĕрсемех пăруласа пăрахĕ те, çавна сыхламалла. Пăрушшине шăнтса вĕлерес мар.

Кивелнĕ фуфайкине хывса çакрĕ Маруç, иртсе ларчĕ.

— Ĕçпех килнĕ-ха эп те. Нуски çыхма пуçланă та...

— Эпĕ те çав ĕçпех-ха. Хăраххине ĕнерех пĕтернĕ, — текелетĕп. Ара, килнĕ çынпа сăмах хушмасан аван мар-çке-ха.

Ларатпăр çапла пански йĕпписене вылятса. Тем вăхăт ларсан, Маруçа киле пĕччен хăварсах, Варвари патне чупрăм. Тĕлĕкре те тĕлленес çук Маруç пуçĕнче çапла усал шухăш йăва çавăрнине. Каларĕ атте тухса кайнă чух, теме сиснĕ пекех: «Алăксене питĕрсех ларăр, тем ăслă çын та пур çĕр çинче, хĕр упраçа хăратма нумай кирлĕ мар», — терĕ.

Çитрĕм. Ман Варвари аппăшĕ патне кайнă та таврăнман иккен. «Килсен пырĕ, калăп», — терĕ амăшĕ. Нумаях тăмарăм, вĕçтерсе килтĕм каялла. Маруç ним пулман пекех çыхса ларать. Кăмакаран шаркку та кăларса çирĕмĕр, кавăн тĕшши те шĕкĕлчерĕмĕр. Çур сехет ытла та иртрĕ пуль. «Варвари патне хам кайса килем-ха. Сирĕн ирпе фермăна та пĕрлех каймалла». Хăпăл-хапăл ĕçне пăрахрĕ хĕр, тумланма тăчĕ. «Ан çӳре, пушансан хăех килет», — тетĕп. Çук, итлемерĕ, тухса вĕçтерчĕ. Ах, ытла та айван пулнă-çке-ха эпĕ, Маруç ĕçне хăйпе илсе кайнине те сисмен. Каялла килмелле марах кайнă вăл, эпĕ ăнланман. Ăсатма та тухмарăм. Лартăм вĕсене кĕтсе.

Пирĕн ун чухнехи пӳрт пысăках марччĕ. Кантăк умĕнчи сак çинче ларнă чух тĕпел кукринче мĕн пурри йăлтах курăнать. Тĕп сакайне те тĕпелтенех кĕмелле тунă. Хĕрсем пĕри те килесси пулмарĕ-ха. Ларатăп çапла. Нускине çыхса пĕтертĕм. Сасартăк тĕп сакай алăкĕ хуллен уçăлма пуçланине курах кайрăм. Кушак теес, кушак çук-ха пирĕн. Куç илмесĕр пăхатăп хайхискер. Уçăлать, уçăлать. Акă чип-чипер икĕ мăйракаллă пуç курăнса кайрĕ. Çаварĕнче шăлĕсем витĕр шĕл кăвар ялкăшать. Пичĕ хуп-хура. Кĕç çаппаçарапакка кĕлетки пилĕк таран тухрĕ. Пĕтĕм хавалтан айлатса çухăрса ятăм та алăкран тухса сирпĕнтĕм, алкумĕнчи чăлан çумне пырса çапăнтăм. Мухтав турра, аттепе анне çирĕп чĕреллĕ тунă мана, чĕре çурăлса каяймарĕ. Хайхи çарапакка кĕлетке ман хыççăн алкумне вирхĕнсе тухрĕ те мана перĕнес пекех çенĕк алăкĕ еннелле ыткăнчĕ. Эп çак самантпа усă курса пӳрте тарса кĕрсе ĕлкĕртĕм, алăка сăлăп ятăм. Тимĕр сăлăп çирĕп, никам та уçаяс çук. Хам тытамак тытнă пек сиксе чĕтретĕп. Шăлсем шакăртатса сикеççĕ. Пуç тӳпинче темскер тӳнклетни илтĕнет. Кĕрĕк тăхăнтăм, ăшă тутăр пĕркентĕм, ниепле те ăшăнаймастăп. Алăк çумне сĕвенсе тăтăм та алкумĕнчи сас-чĕве итлетĕп. Тем шăкăртатнă пек туйăнчĕ. Тухса кайни-мĕнĕ илтĕнмерĕ. Кĕçех хайхи ман мăйракаллă шуйттан этем чĕлхипе калаçма тытăнчĕ:

—Уç-ха, шăнса вилеп эп кунта. Эп — Мишша, Çăкалăх ачи. Маруç мана кунта улах пулать тенипе килтĕм. Маруçпа иккĕн сана вăйăлла хăратса илес тесе çеç хăтлантăм. Нимле мăйрака та çук ман — çĕр улми çыхса хутăм та. Çăварти кăвар — кăмрăкланнă хăйă пуçĕ. Ан хăра, тивместĕп эп сана. Тĕп сакайне хăварнă тумтире ывăтса пар хуть. Маруç тул енчен çăра çакса хăварнă, алăк уçăлмасть, — тет.




Сывлами тăратăп. «Пăх-ха, епле чееленет, — тетĕп хам ăшра. — Шиш кĕртеп эп сана. Тупнă кунта ухмаха».

Тем таран йăлăнчĕ. «Турă умĕнче сăхсăхса калатăп, вилме ан пар, уçса кĕрт. Илтетне, сивĕпе пĕренесем шартлатса çурăлаççĕ. Вунă минутран пĕтĕм кĕлеткене тăм илет, уç ĕнтĕ», — тет.

Тем шухăш ун пуçĕнче, эп ăçтан пĕлем. Ыр çын тĕп сакайне кĕрсе ларĕ-и? Çур сăмах та чĕнмерĕм, чăмаккипех алăк умне урасене хуçлатса лартăм. «Ирчченех çапла ларатăп», — тетĕп хам ăшра. Тем вăхăтран çывăрнă та кайнă, вăранса кайрăм хайхи. Алкумĕнче шăп. Çурçĕр иртни икĕ сехет. Кантăк умĕнчи сак çине пырса лартăм та ирччен тек куç хупмарăм. Кантăксем çӳле çити шăнса ларнă. Акă вĕрсе ăшăтатăп. Урамра кам та пулин иртсе кайнине курсанах шаккаса чĕнме хатĕрленсе ларатăп. Çутăлма пуçларĕ. Çур кантăкне вĕрсе ăшăтрăм. Çап-çутах пулчĕ. Тем пек тул çутăласса кĕтетĕп. Аранах ултă сехет çитрĕ. Кĕçех хапхаран Варвари килсе кĕчĕ. Кĕчĕ те алăк патĕнчен каялла хапха еннелле утма тытăнчĕ. Пуçларăм кантăка тӳнлеттерме. Чун кĕрсех кайрĕ. Илтрĕ Варвари, чарăнса тăчĕ, ним ăнланмасăр ун-кун пăхрĕ. Татах шаккатăп, кĕр тесе çухăратăп. Алăк патне каялла пычĕ. «Кам питĕрсе хăварнă вара сана?» — çухăрса ячĕ хайхискер.

— Уç! Кĕр! — тетĕп ним ăнланмасăр.

Акă алăка уçрĕ, алкумне кĕчĕ те хăрушă сасăпа çухăрса ячĕ. Эп çаплах нимĕн ăнланаймастăп. Темскер кĕптĕрт-кĕптĕрт турĕ. Варвари такăнса ӳкнĕ иккен. Алăк умне кĕресçе кĕчĕ те каялла чупса тухса кайрĕ. Эп çаплах алăка уçма хăраса тăратăп. Кĕçех виçĕ кӳршĕ арçыннине чĕнсе килчĕ Варвари. Уçса кĕртрĕм. Пирĕн алкумĕнче шăнса вилнĕ арçын выртать иккен. Хытса выртнă леш пархатарсăр. Арçынсем вилле тĕкĕнме хушмарĕç, милицисене чĕнме ячĕç. Кăнтăрла тĕлне икĕ лавпа çитрĕç. Пӳртех илсе кĕчĕç вилле. Пичĕ хуп-хура хăрăм, çамки çине икĕ çĕр улми çыхса мăйрака тунă. Çаварĕнче сӳннĕ кăмрăк. Хăй шап-шурă, вут каски пекех шак хытнă.

Маруçа чĕнсе килчĕç. Каччă виллине курсан Маруç та юпа пекех хытса кайрĕ. Малтанах нимĕн те пĕлмĕше пеме пăхрĕ вăл, ман çине йăвантарма хăтланчĕ, тунчĕ. Манăн та пĕр айăпсăрах айăплă пулас килмерĕ ĕнтĕ. Милицисем тĕп сакайĕнчен пархатарсăрăн тумтирне илсе тухрĕç. Мана эс вĕлернĕ те виллине кăларса пăрахнă теме пăхрĕç. Макрана ячĕ Маруç. «Эппин алăка тул енчен кам çăраççи çакса хăварнă? — сиксе тăчĕ Варвари. — Çулла мар вĕт». Маруçпа иксĕмĕре çеç мар, Варварие те, кӳршĕ арçыннисене те темĕн чухлĕ тĕпчерĕç, уйрăмшар ыйтса çырса пычĕç. Маруçа пĕрлех лартса кайрĕç. Кайран пĕлтĕм: Варвари патне пыман та вăл çав каç. Вилене тăванĕсем килсе илсе кайрĕç. Тем вăхăтран сучĕ пулчĕ. Йăлт каласа пачĕ Маруç. Мана айăпсăр тесе киле ячĕç, Маруçа икĕ çул тĕрмере лармалла йышăнчĕç. Ак çак хут çинче йăлтах çырнă. Ку хут — çав суд йышăнăвĕ. Вăйăран вăкăр тухрĕ-ши е Маруç мана кĕвĕçсе кураймасăр юри тунă усал ĕç пулчĕ-ши — паян кун та ăнланса пĕтерейместĕп. Ял ачи те мар-çке, пач палламан таçти ют çынна хупса хăварнă. Ăçтан ырă шухăшпа тунă пултăр. Пĕтĕм таврипе тĕлĕнтертĕмĕр. Тавăрасшăн тесен – пĕр усал туман эп ăна, ытла калаççах та кайман. Ара, манран та çамрăкчĕ вăл. Маруç хăй те ыррине кураймарĕ. Тĕрмерен сывлăхне пĕтерсе чахотка тупса килчĕ. Унтан вăрçă кĕрлесе кайрĕ. Манăн та вĕренесси пулмарĕ. Аттесем вăрçа кайрĕç. Пирĕн атте аманса таврăнчĕ, Маруççем виле хучĕ илчĕç. Вăрçă чарăннă çул Маруçа чахотка çисе ячĕ. Пытартăмăр.

Акă сире Урик аппан пĕр аса илĕвĕ. Тата тем курмалли юлнă-ха ĕнтĕ ун.

— Кукамай, — сиксе тăтăм эпĕ чăтаймасăр. Эп хама тăруках çитĕнсе çитнĕ çын пек туйса илтĕм. — Вилĕм сăмаха ан асăнха ăна. Çуралма пĕр кун пулнине вилме те кунĕ пулĕ. Сана Турă уйăрса панă шывпа тăвар пĕтмен пуль-ха çĕр çинче, çавăнпа пурăнатăн. Сан çинчен пĕр калав çырам-и, э? Эс айăпсăррине пĕтĕм чăваш пĕлтĕр, чунна канлĕх килтĕр. Эпĕ те кăçал вун саккăр тултаратăп, аслă шкула каяс ĕмĕтпе пурăнатăп. Ман çул çинче çавнашкал пăтăрмахсем сиксе ан тухчăр тесе ырă пил пар мана. Ĕмĕрӳ вăрăм пултăр, манăн ачасене те курса савăнмалăх çутă кунсем пулччăр. Кукка, тăсса яр купăсна, эп кукамая ташша чĕнетĕп. Пуçри йывăр шухăша тек йăтса ан çӳре, кукамай. Кӳр кунта сарăхса типнĕ хут таткине, ялкăшсах çунтăр. Акă шăрпăк чĕртем, канлĕх килтĕр. Иртнĕ кун мĕлки сирĕлтĕр. Атя, пĕр ватлăхра-яшлăхра ял тĕлĕнсе тăтăр. Чăваш ташши илемлĕ, çыннисем тата илемлĕрех.

Кукка купăсне тăсса ячĕ — пĕтĕм тăван ташша тухрĕ.

## КОНКУРС

# Пĕрремĕш космонавта халалласа

1961 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче ТАСС çын пĕрремĕш хут тĕнче уçлăхне çĕкленнине пĕлтернĕ. Юрий Алексеевич Гагаринăн «Кайрăмăр!» сăмахĕпе унăн 108 минутлăх вĕçевĕ наука прогресĕнче çĕнĕ тапхăр – тĕнче уçлăхне çĕнĕлле тĕпчесси – пуçланнине пĕлтернĕ. А.Г.Николаев космонавт летчикăн тăван ялĕнчи мемориал комплексĕпе «Хыпар» Издательство çурчĕ çак темăпа темиçе хут та конкурс ирттернĕ.

Халĕ «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене çырăнса илекенсен хушшинче тепĕр тупăшу ирттересси пирки хыпарлатпăр. «Пĕлетĕр-и, мĕнле ÇЫН пулнă вăл...» ятлă. Ăна Юрий Гагарин çуралнăранпа кăçалхи пуш уйăхĕнче 80 çул çитнине халалланă.

«Пĕлетĕр-и, мĕнле ÇЫН пулнă вăл...» конкурса 14 çул тултарнисенчен пуçласа кашниех хутшăнма пултарать. Пĕрремĕш космонавтăн сумлă юбилейне халалласа çырнă сăвăсене, юрăсене, рефератсене, электрон презентацисене, кивĕ сăн ӳкерчĕксене «Хыпар» хаçат редакцийĕнче кăçалхи çу уйăхĕн пĕрремĕшĕччен çак йĕркесен авторĕ йышăнать. Конкурса çĕртме уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пĕтĕмлетеççĕ, çĕнтерӳçĕсене Шуршăлти космонавтика музейĕнче чысласçĕ.

**Юрий СТЕПАНОВ.**

**РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ**

**ПРОДАЮ**

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**33. Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит, торф.** Доставка. Т. 89053465671.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**154. Грабли** от 24 тыс. руб., **плуги, картофелесажалки, окучники, фрезы, косилки.** Низкие цены. **Все новое!** Доставка! Тел.: 89278516858, 89379559802.

«ХРЕСЧЕН САССИ» Обществăпа политика хаçачĕ. Индекс 54838. Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ. Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)

Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13. Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru, e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 [1] регистрациленĕ. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă. Заказ 859 Тираж 4403

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама текстчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.